24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
МАРТ
30
ВЫРСАРНИКУН
75 (5790) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрле шăр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ

Предприятисен, машинно-тракторнăй станцисен, колхозсен тата совет учрежденисен ĕçĕсене лайăхлатассинче пуçламĕш парторганизацисен ролĕ куллен-кун ӳссе пырать. Пуçламĕш парторганизацисем ВКП(б) XVIII съезчĕ хыççăн производствăллă ĕçсене активлăн хутшăнма, хуçалăх ĕçĕсемшĕн ответлă пулса ĕçлеме тытăнчĕç, парти членĕсене кандидачĕсене воспитани парассине лайăхлатрĕç.

Пуçламĕш парторганизацисен партиллĕ-политикăллă ĕçри опычĕ пуянланчĕ, парти организацисем тавра беспартийнăйсен активĕ тачăрах пĕрлешсе тăма тытăнчĕ, парти организацисене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ кадрсем пычĕç. Çавна май парти организацисене ертсе пырасси лайăхланчĕ, руководительсем коммунистсемпе, çавăн пекех беспартийнăй массăсемпе сыхăну тытасси çирĕпленчĕ, партиллĕ ĕçре большевикла критикăпа самокритика анлăн сарăлса пыраççĕ.

Анчах та пирĕн пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсенче çитменлĕхсем те нумай-ха. Уйрăмăнах предприятисемпе транспорт çинчи пуçламĕш организацисем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне промышленность тата транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес еннелле çавăрман, хăшпĕр организацисем производствăллă ĕçсен аяккинче тăраççĕ. Кун çинчен ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенире тĕплĕн кăтартса панă.

Пуçламĕш парторганизацисен пĕтĕм ĕçне ВКП(б) XVIII съезчĕ тата XVIII партконференци решенийĕсем хушнă пек урăхлатса çĕнетессинче вĕсен руководителĕсем, пуçламĕш парторганизаци секретарĕсем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕн тĕп задачи — парти членĕсене ертсе пырасси, воспитани парасси пулать, парти членĕсемпе ĕçлессине лайăхлатса, рабочисемпе колхозниксене тата служащисене коммунизм строительствин задачисене пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕн хăйĕн ĕçĕнче коммунистсен производствăллă активлăхне çĕклесе пымалла, вĕсене партиллĕ-политикăллă тата хуçалăхлă задачăсене татса парас ĕçе куллен хутшăнтармалла.

Пирĕн лайăх ĕçлекен пуçламĕш парторганизацисем тата секретарьсем сахал мар. Унашкал пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем партиллĕ-политикăллă тата хуçалăхлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама коммунистсене тата пĕтĕм массăна мобилизацилеççĕ, вĕсем массăсен чăн-чăн организаторĕсем, руководителĕсем пулса тăраççĕ.

Кувакино районĕнчи «12 лет Октября» колхозри парторганизаци секретарĕнче Лаптев юлташ ĕçлет. Вăл коммунистсем, пĕтĕм колхозниксем умĕнче пысăк авторитетпа усă курать, ăна ĕççыннисем юратаççĕ тата хисеплеççĕ. Лаптев юлташ коммунистсен, беспартийнăйсен сăмахĕсене тимлĕн итлет, вĕсем кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшать. Çапла, пĕррехинче колхозниксем колхозра хата-лаборатори çукки, агротехникăна вĕренме тытăнманни çине кăтартса панă. Лаптев юлташ çак ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явма лартать, коммунистсем çак пуçарăва ырлаççĕ. Халĕ «12 лет Октября» колхоза хата-лаборатори те, агрокружок та, зоотехника кружокĕ те пур, вĕсенче 70 çын ытла вĕренеççĕ. Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ кашни коммунистăн пурнăçĕпе ĕçĕсене пĕлсе тăрать, вĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен хутшăнтарать, кашнине поручениесем парать, вĕсене пурнăçа кĕртме пулăшать. Коммунистсем панă сĕнӳсене Лаптев юлташ çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырать.

Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри парторганизацине Мартынов юлташ ертсе пырать. Мартынов юлташ пуçламĕш парторганизаци секретарĕнче нумай вăхăт хушши мар, пурĕ те 5 уйăх кăна ĕçлет-ха. Анчах та вăл çак кĕске вăхăт хушшинче парторганизаци ĕçне чылай малалла ячĕ. Парторгăнсен иртнĕ суйлавĕ вăхăтĕнче коммунистсем панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртесси мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухса, коммунистсен пухăвĕнче каласа панă, малашлăхи ĕçсене палăртнă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленипе паллашнă хыççăн, кашни коммуниста уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Коммунистсем пурте производствăна активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ, вĕсем беспартийнăйсеммĕн пример пулса тăраççĕ. Мартынов юлташ парти членĕсемпе, кандидачĕсемпе ĕçлессине, вĕсен вăйĕпе беспартийнăй актива организацилессине хăйĕн тĕп ĕçĕ тесе шутлать. Вăл хуçалăхлă задачăсене пурнăçлама коммунистсене кăна мар, пĕтĕм активa организацилесе ертсе пыма пĕлет.

«Красная Чувашия» колхозри (Тăвай районĕ) пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Ефремов юлташ та начар мар ĕçлет. «Красная Чувашия» колхоз яланах малта пынă пуçламĕш парторганизацин секретарĕ ĕçлеме пĕлнинчен нумай килет. Çакăнта асăннă организацисем колхоз правленисен ĕçĕсене контроль тăвассине, вĕсене ĕçре пулăшассине тивĕçлипе йĕркеленĕ. Халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пыраççĕ, партипе правительствăн решенийĕсене массăна тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Промышленность предприятийĕсемпе транспорт çинчи пуçламĕш парторганизацисенче те лайăх ĕçлекен секретарьсем сахал мар. Кунта Канаш узелĕнчи партбюро секретарьне Ржавин юлташа, Куславкка комбинатĕнчи партбюро секретарьне Новиков юлташа илсе кăтартни те çителĕклĕ. Вĕсем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ кăтартса панă çитменлĕхсене, промышленноçпа транспорт тĕлĕшĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. График тăрăх ĕçлес, продукци пахалăхне лайăхлатас, ăна туса кăларма ларакан хака йӳнетес, топливăпа, чĕртаварпа перекетлĕ усă курас ыйтусемпе кунти парторганизацисем хăшпĕр ĕçсене тунă та ĕнтĕ.

Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем пурте лайăх ĕçлеççĕ тесе калама пултараймастпăр. Халĕ пирĕн партиллĕ ĕçе организацилеме пултарайман секретарьсем те пур. Çавăн пек секретарьсем парти членĕсемпе кандидачĕсене политика тĕлĕшĕнчен ӳстерессишĕн, вĕсен производствăрн авангардлă рольне хăпартассишĕн, партиллĕ-политикăллă ĕçе организацилессишĕн тăрăшмаççĕ. Çапла, сăмахран, Пăрачкав машинно-тракторнăй станцинчи парторганизаци секретарĕ Бензин юлташ. Вăл коммунистсен умĕнче авторитетпа сахал усă курать. Бензин юлташ чĕнсен хăшпĕр коммунистсем пухăва та пымаççĕ. Бензин юлташ çаксăнашкал йĕркесĕрлĕхсемпе хăй кĕрешме пултараймасть иккен, дисциплинăна пăсакан коммунистсене МТС директорĕ чĕнсе вăрçать. Коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе Бензин юлташ пачах тăрăшмасть, коммунистсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» мĕнле вĕреннипе интересленмест.

Етĕрне хула Совечĕн исполкомĕнчи парторганизаци секретарĕ пулнă Кубарев та коммунистсем хăйне шанса панă ĕçе пурнăçа кĕртме пултарайман. Вăл коммунистенчен тата беспартийнăй массăран уйăрăлса кайнă, киревсĕр ĕçсем туса тытăннă. Вăл партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртме те шутламан. Çакăншăн ăна коммунистсем пуçламĕш парторганизаци секретарĕнчен кăларнă. Вăрнар районĕнчи «Волонтер» колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Николаев, Етĕрнери горпори пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Белобаев юлташсем государство интересĕсемпе кĕрешме тăрăшман, вĕсем государство пурлăхне çаратакансемпе килĕшнĕ. Парти организаци руководителĕн ятне варалакансем тĕл пулкалаççĕ-ха. Парти шанса панă пысăк ĕçе пурнăçлама пултарайман çынсене пирĕн парти руководствăра тытма пултараймасть.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ вăл—партири паллă çын. Унăн Ленин—Сталин партин генеральнăй линийĕпе, партипе правительство решенийĕсене, коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешмелле, коммунистсемпе, беспартийнăй массăсемпе тачă çыхăну тытмалла, вĕсене коммунизм строительствин историллĕ задачисене ăнăçлăн пурнăçлама мобилизацилемелле.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе, вĕсен заместителĕсемпе ĕçлесси, вĕсене ертсе пыма вĕрентесси, воспитани парасси ВКП(б) райкомĕсен ĕçĕнче пысăк вырăна тăмалла. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсен составне çирĕплетессишĕн, вĕсен рольне çĕклессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелле туни— колхозниксен хастарлăхне çĕклесе ярать

ЧАПЛĂ ДОКУМЕНТ

Коммунистла партипе совет правительстви колхоз стройне çирĕплетсех пырассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Çакна эпир хамăрăн коллективлă пурнăçăн кашни утăмĕнчех лайăх туйса пытăмăр, тата халĕ те лайăх туйса тăратпăр. Пирĕн çулпуç хакла Сталин юлташ çирĕшшĕн, колхозниксеммĕн, тăрăшни-гатах та тухăçлăн ĕçлеме, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать. Çак пулать, иртнĕ çулсенче начар ĕçлемен эпир. Тĕштирĕ тăвас ĕçри паха результатсене 1939 тата 1940 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартса патăмăр. Иртнĕ çулти паха показательсем кăçал та ялхуçалăх выставкине хутшăнма право пачĕç. Вăтам шутпа кашни гектартан 18,16 центнер тĕштирĕ туса илнĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 5,5 килограмм тĕштирĕ, 6,2 килограмм çĕрулми, 78 пус укçа валеçрĕмĕр.

Колхозниксен ыранхи пурнăçĕ татах та телейлĕ, татах та савăнăçлă. Çакна лайăх ĕненсе вĕсем пĕтĕм вăй-хала хурса çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн кĕрешеççĕ. Хамăрăн резервсене тĕплĕн хисепе илсе кăçал кашни гектартан 19,70 центнер тĕштирĕ туса илме пултăмăр. Иртнĕ çулсенчи опытсем начар мар, вĕсем пире хамăр умма лартнă задачăсене ăнăçлăнах пурнăçа кĕртме май параççĕ.

Нумай отраслĕсем енĕпе çирĕпленсе пырать пирĕн колхоз. Ĕне, сысна, чăхчĕп фермисем пур. Ĕне ферми тĕлĕшпе панă плана тултартăмăр. Общественнăй вылăх-чĕрлĕх йышне нумайлатса пырас шутпа колхозниксенчен 7 пăру илме контрактаци договорĕ турăмăр. Чăх-чĕпсем 67 пус пур, план тăрăх 80 пус пулмалла. Çĕрпӳри инкубаци станцийĕпе договор турăмăр, вăл 150 чĕп кăларса памăр пулчĕ.

Кĕскен каласан, çакăн пек ĕнтĕ пирĕн ĕçри ӳсĕмсем. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени çав çитĕнӳсене малалла ӳстерме май парать. Ку чаплă документ колхозниксен ĕçлес хаваслăхне темиçе хут ӳстерет тата ĕçшĕн тӳлессинче халиччен пулнă тĕрĕсмарлăха пăрахăç кăларма май парать. Колхоз çĕрĕ пур çĕрте те тенĕ пек пĕр пекрех. Апла пулин те пур бригадăсем те пĕр пек тухăçлă тырпул туса илмен. Иртнĕ çулта, сăмахран, çĕрремĕш бригада 17,49 центнер, тăваттăмĕш бригада 18,48 центнер тĕшшырă туса илнĕ. Анчах та мала тухнă бригадăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемерĕмĕр, çĕнĕ постановлени çак çитменлĕхе пуçĕпех пĕтерме май парать. Кăçалтан пуçласа тупăшсене çкунне хисепе илсе кăна мар, уйрăмăнах ĕçшĕн пахалăхне шута илсе валеçме тытăкатпăр. Кун пек йĕрке пире социализмлă çĕрĕçне халиччен-хинчен те чаплăрах çĕнтерӳсем тума май парĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлennине пирĕн колхозниксем тулли хаваспа кĕтсе илчĕç. Ялхуçалăх культурисен вăтам тухăçлăхĕ тĕлĕшпе республикăна çирĕплетсе панă плана пытлашшипех тултарасса лайăх шанаççĕ вĕсем. Вăл чăн та çапла. Иртнĕ çулти тырпул тухăçĕ начар мар. Уйрăмах пахча-çимĕç бригадинчи колхозниксем лайăх ĕçленине палăртма кирлĕ. Кашни гектартан пр çитĕнекен купăста 336 центнер, кая юлса çитĕнекен купăста — 411, помидор 192 центнер туса илнĕ т. ыт. те.

Постановленире кăтартнă тăрăх, пирĕн республикăра вăтам шутпа 115 центнер çĕрулми туса илмелле. Иртнĕ çулта эпир кашни гектартан 216 центнер ытла туса илнĕ.

Хамăр республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе конюхсене уйрăмăн пухса ăнлантарса патăмăр. Фермăра ĕçлекенсемпе конюхсем вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерме пулса татăклă обязательствăсем илчĕç. План тăрăх сысна ферминче 80 пуç сысна пулмалла, халĕ 250 пуса çитрĕ. Икĕленмелли çук, фермăра ĕçлекен Ефремовпа Фадеев юлташсем хăйсен çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртсе, вуншар сысна çури хăйсен аллине илĕç.

Çак чаплă постановленине кашни колхозникех ăнлантарса паратпăр. Кун хыççăн вĕсем халичченхинчен те ытларах хавхаланса ĕçлĕç.

И. ИВАНОВ.
Красноармейски районри «Волга» колхоз председателĕ.

Агитаторсем бригадăсенче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине районри колхозсенче тĕплĕн сӳтсе-явăççĕ.

Янкасри «Волга» колхозра постановлени çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе кашни бригадăрах агитаторсем ĕçлеççĕ. Агитаторсем СНК СССР тата ЦК ВКП(б) постановленийĕ çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Мăн-Шетмĕ ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозра та ку ĕç аван пырать.

Колхоз правленийĕн членĕ И. Марков çапла калать:

— Ку постановлени пире ĕçре татах хаваслантарать. Пирĕн колхозниксенчен хăшпĕрисем ĕçĕн пахалăхĕшĕн мар, ĕçкунĕ нумайтарах тăвассăн тăрăшнă. Фермăсенче те çаван пекех пулнă. Кун ирттĕр те çĕр ирттĕр—ĕçкунĕ çавах пулать, тесе шутланă. Халĕ пачах урăхла, постановлени колхозра уравниловкăна тĕп тума пулăшать, — тет вăл.

Чуллă ялсоветĕнче те ку постановленине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Постановлени çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе агитаторсем ĕçе тытăнчĕç. Вĕсем колхозсенче пухусем туса калаçусем пртгереççĕ.

М. П.

Вăйлă тырпулшăн ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç

ШАХАСАН. Районри колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленине ăнлантарас ĕç аванласах пырать.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра агитаторсем уйăрнă. Вĕсем докладсем тата калаçусем ирттереççĕ. Колхозниксем вăл постановленине пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕç. Колхоз хуçалăхне тĕреклетессишĕн тăрăшса ĕçлеме сăмах параççĕ.

— Иртнĕ çулта эпир гектартан вăтам шутпа 100 пăт тĕштирĕ туса илтĕмĕр. Çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана та ăнăçлăн пурнăçларăмăр. Пахча-çимĕçсем те тухăçлă пулнă. Правительство постановленийĕ пире татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать, колхозниксене ĕçшĕн тӳлес ĕçри уравниловкăна пĕтерет,—тет колхозри 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Степанов юлташ.

Ферма заведующийĕ Внучков юлташ постановленине фермăра ĕçлекен колхозниксем хушшинче ăнлантарса панă. Вĕсем вылăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлеме пулнă. Доярка Артизанова фермăри ĕнесене лайăх пăхма сăмах панă. Вăл кашни ĕнерен планпа пăхнă хисепрен ирттерсе сĕт суса илме май пурри çинчен калаланă.

Калиновкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозра мартăн 13-мĕшĕнче тухнă постановленине кашни колхозник патне ситерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Комсомолецсем бригадăсенче калаçусем ирттереççĕ. Колхозниксем вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç, колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

— Иртнĕ çулта эпир вăтам шутпа кашни гектартан 120-шер пăт тĕштирĕ туса илтĕмĕр. Кăçал кирек мĕнле çаталăкра та 130 пăтран кая мар тĕштирĕ туса илетпĕр. Партипе правительство йышăннă постановленине тĕплĕн пурнăçласа пыни колхозниксен пурнăçне лайăхлатма пулăшать,—тет колхоз председателĕ Николаев юлташ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине Матьшӳри «Çамрăк колхозник», Тури Сурăмри «Заря» колхозсенче те сӳтсе-явнă. Колхозниксем вăл постановленине чĕререн ырлаççĕ.

ВАС. ЯКОВЛЕВ.

Тулли кăмăлпа ырларĕç

Çак кунсенче «Сталинцы» колхоз (Çĕрпӳ районĕ) членĕсен пухăвĕ ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине сӳтсе-яврĕ. Ку постановленине колхозниксем пурте тулли кăмăлпа ырларĕç.

— Партипе правительствăн çак ăслăран та ăслă постановленийĕ пире тата ытларах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарат,—теççĕ колхозниксем.

Иртнĕ çул пирĕн колхозăн та тырпул тухăçлăхне хăпартма пысăк майсем пулнине кăтартса пачĕ. Çĕре агротехника правилисем тăрăх ĕçлемелле, тислĕк тата торф ытларах хатĕрлесе уя кăлармалла, уйăрти ĕçсене вăхăтра тумалла. Çапла ĕçлесен тырпул тухăçне эпир нумай ӳстерĕпĕр. Колхоз организациленĕ 4 фермăра та вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне нумай ӳстермелле-ха.

Плана ирттерсе тултаракан колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлени пире пур ĕçсене те пысăк ăнăçлăхпа туса пымалли парĕ.

А. МИХЕЕВ.

ФЗО шкулне вĕренме çирĕп сывлăхлă çамрăксене илтĕмĕр

ВĂРМАР, мартăн 29-мĕш. (Телефон тăрăх). Колхоз çамрăкĕсене призыв йĕркипе вăрман промышленноçĕнчи ФЗО шкулĕсене вĕренме илме вăхăтра тытăнтăмăр. Çамрăксем шкула йышăнма ыйтса кашни кунах призыв комиссине заявленисем параççĕ. Районри призыв комиссийĕ заявленисене тĕплĕн пăхса тухать. Эпир иртнĕ призывра ФЗО шкулĕсене çирĕп сывлăхлă, хутла лайăх пĕлекен тата производствăра лайăх ĕçлекен çамрăксене панă. Вĕсем пурте хăйсене янă шкулсенче отлично вĕренеççĕ. Вăрман промышленноçĕнчи ФЗО шкулне те тĕплĕн тĕрĕсленĕ çамрăксене илетпĕр.

Мартăн 29-мĕш тĕлне призыв комиссийĕ ФЗО шкулне 20 çын илнĕ. Пирĕн районран татах та 18 çын илмелле. Комиссинче пăхса тухман заявленисем пур. Мартăн 31-мĕшĕнче çаван пек заявленисене пăхса тухатпăр, ФЗО шкулне кирлĕ чухлĕ вĕренекенсене илсе çитеретпĕр.

ФЗО шкулне вĕренме каякансем вал ли тумтирсем çĕлеме заказ патăмăр Районри çĕвĕ çĕлекен мастерской çурма пальтосем, гимнастеркăсем, картуссем т. ыт. çĕлеме тытăнчĕ. Райсоюз ботинкăсем хатĕрленĕ.

Районра призыв йĕркипе ФЗО шкулне вĕренме илнĕ çамрăксемпе каласусем ирттертĕмĕр. Вĕсем пурте вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен квалификациллĕ рабочисем пулма ĕмĕтленеççĕ.

ЯРАНДАЙКИН.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Резина промышленноçĕн Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен

1. Резина промышленноçĕн пĕтĕм Союзлă Халăх Комиссариатне тăвас, унăн составне каучук, резина, шинасем тата асбест тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисене кĕртес.

2. СССР Совнаркомĕ çирĕплетнĕ список тăрăх тивĕçлĕ предприятисемпе организацисене Резина промышленноçĕн Халăх Комиссариатне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 28-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Т. Б. Митрохин юлташа СССР Резина промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Тихон Борисович Митрохин юлташа СССР Резина промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 28-мĕш.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔН ПЛАННЕ ПĔТĔМПЕХ ТУЛТАРМАЛЛА

Планран ирттерсе

ЕТĔРНЕ. Кăтаптри «Пионер» колхозран вăрман хатĕрлевĕнче кунсерен 50—60 колхозник ĕçлерĕç. Турттаракансем кашни кунах икшер рейс турĕç. Çапла ĕçленипе колхоз 397 кубометр вăрман касса хатĕрлесе тата 1900 кубометр вăрман турттарса 1-мĕш кварталти плана срокчен ытлашшипех тултарчĕ.

Уйрăмăнах 54 çулхи В. Константинов юлташ бригадинчи колхозниксем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Ку бригада вăрман хатĕрлес плана мартăн 10-мĕшĕнче, турттарас плана мартăн 19-мĕшĕнче тултарчĕ. В. Григорьев, А. Матюхина, Ф. Гаврилов, И. Васильев колхозниксем нормăна кунсеренех 140—150 процента çити тултарнă. Комсомолец К. Павлов юлташ ертсе пыракан бригадăри Р. Игнатьев, Я. Игнатьев, В. Никитин, Е. Шоронова колхозниксем 20—25-шер кубометр вăрман турттарнă.

Халĕ колхоз планран ирттерсе 200 фестметр вăрман хатĕрлеме йышăннă. В. Константинов юлташ бригадини хăй çине илнĕ обязательствăна 3 кун хутшăнче тултарчĕ, вăл 40 фестметр касса хатĕрлерĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ

Единоличниксем юлса пыраççĕ

Шăхасан районĕ вăрман хатĕрлес ĕçе вăйлатса пырать. Мартăн 21-мĕшне вăрман касса хатĕрлес тата турттарас плана 92 процент ытла тултарнă.

«Березовка», «Новый путь», «Канаш» т. ыт. колхозсем хăйсен заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçларĕç. Вăл колхозсенчи колхозниксем вăрманта тăрăшса ĕçлерĕç. Колхоз председателĕсем вăрманта ĕçе тĕрĕс организацилеме, ĕçри чăрмавсене вăхăтра пĕтерсе пыма пулăшнă.

Хăшпĕр колхозсем халĕ те вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеме тытăнман. Анаткас Кибечри, Енĕшри Горький ячĕпе тăракан, Малтикас-Шĕкĕрти «Красный пахарь», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем ăпăх ĕçлеçсе, çĕр çитменлĕхе пуçĕпех пĕтерме май парать. Кăçалтан пуçласа тупăшсене çкунне хисепе илсе кăна мар, уйрăмăнах ĕçĕн пахалăхне шута илсе валеçме тытăкатпăр. Кун пек йĕрке пире социализмлă çĕрĕçне халиччен-хинчен те чаплăрах çĕнтерӳсем тума май парĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленине пирĕн колхозниксем тулли хаваспа кĕтсе илчĕç. Ялхуçалăх культурисен вăтам тухăçлăхĕ тĕлĕшпе республикăна çирĕплетсе панă плана пытлашшипех тултарасса лайăх шанаççĕ вĕсем. Вăл чăн та çапла. Иртнĕ çулти тырпул тухăçĕ начар мар. Уйрăмах пахча-çимĕç бригадинчи колхозниксем лайăх ĕçленине палăртма кирлĕ. Кашни гектартан пр çитĕнекен купăста 336 центнер, кая юлса çитĕнекен купăста — 411, помидор 192 центнер туса илнĕ т. ыт. те.

Постановленире кăтартнă тăрăх, пирĕн республикăра вăтам шутпа 115 центнер çĕрулми туса илмелле. Иртнĕ çулта эпир кашни гектартан 216 центнер ытла туса илнĕ.

Хамăр республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе конюхсене уйрăмăн пухса ăнлантарса патăмăр. Фермăра ĕçлекенсемпе конюхсем вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерме пулса татăклă обязательствăсем илчĕç. План тăрăх сысна ферминче 80 пуç сысна пулмалла, халĕ 250 пуса çитрĕ. Икĕленмелли çук, фермăра ĕçлекен Ефремовпа Фадеев юлташсем хăйсен çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртсе, вуншар сысна çури хăйсен аллине илĕç.

Çак чаплă постановленине кашни колхозникех ăнлантарса паратпăр. Кун хыççăн вĕсем халичченхинчен те ытларах хавхаланса ĕçлĕç.

И. ИВАНОВ.
Красноармейски районри «Волга» колхоз председателĕ.

Плана кашни ялсоветпа колхоз тăрăх тултармалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Район мартăн 27-мĕшне вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе панă заданине 92 процент, турттарса кăларас плана 81 процент тултарнă.

Пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, ĕç начар мар пек курăнать. Анчах та графика районри 96 колхозран 24 колхоз кăна тултарнă. «Победа», «Красная Горка» тата Сталин ячĕпе тăракан, Карай ялсоветĕнчи «Красная звезда» тата Войков ячĕпе тăракан колхозсем района каялла туртса пыраççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозран вăрманта кашни кунах çураннисем 29 çын, лашаллисем 19 çын ĕçлемелле. Мартăн 26-мĕшĕнче çураннисем 22, лашаллисем 2 çын кăна ĕçлерĕç. Тепĕр кунне вăрман касса хатĕрлеме кайнисенчен 16 колхозник каялла тарса килнĕ.

Упи ялсоветĕнчи «Коминтерн» колхоз председателĕ Степанов юлташ партипе правительство вăрман касса хатĕрлеме тата турттарма панă заданине срокра тултаратпăр, тесе темиçе хутчен те сăмах панă. Анчах вăл хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртмест. Колхозăн 400 фестметр вăрман касса хатĕрлемелле, паянхи куна 254 фестметр кăна хатĕрленĕ. Вăрман турттарма панă плана (колхозăн 360 фестметр турттармалла) тултарма пачах тытăнман.

Кун пек колхозсем районра татах та пур. Анчах партипе правительство панă плана кашни ялсовет, колхоз тăрăх пĕтĕмпех тултарассишĕн районра çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Хастарлă ĕçлекен колхозник

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. П. Васьков юлташ Ишекассинчи «Великан» колхозра чи хастарлă колхозниксенчен пĕри шутланать. Вăл вăрман хатĕрлес плана срокченех тултарнă. Васьков юлташ 6 кубометр вырăнне 11 кубометр хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне лашапа 11 кубометр йывăç турттарнă.

А. НИКИТИН.

Вăрманта ĕçлемеççĕ

ИШЛЕЙ. Тăван ялсоветĕнчи Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тӳлевлĕ повинность йĕркипе вăрман хатĕрлевĕнче пачах ĕçлемеççĕ, тесен те юрать. Февраль уйăхĕнче тăватă сын кайса ĕçленисĕр пуçне, ку тарана çитсе пĕр çын та вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлемен.

Колхозниксене вăрман хатĕрлевне хутшăнтарас тĕлĕшпе колхоз председателĕ Смелов тата ялсовет председателĕ Филиппов юлташсем нимĕн те тумаççĕ.

М. МАКОВ.

СОВЕТСКОЕ. Александровски ялсоветĕ вăрман хатĕрлевĕнче çавтери кая юлса пырать. Вăл вăрман касса хатĕрлемелли плана 14 процент, турттарас тĕлĕшпе 20 процент кăна тултарнă. Уйрăмăнах «Добролет» колхоз начар ĕçлет. Колхозăн 80 фесметр вăрман касса хатĕрлемелле, 250 фесметр турттармалла пулсан, пĕтĕмпе те 14 фесметр хатĕрлесе, 51 фесметр кăна тултарнă. Паянхи куна вăрманта пĕр çын та ĕçлемест.

КУЗЬМИН.

Карело-Финн СС Республикинчи театрсем

Хăйĕн пурнăçĕн пирвайхи çулĕнче Карело-Финн СС Республики темиçе çĕнĕ театрпа пуянланчĕ. Виппурипе Сортавалăра драмăн лайăх трупписем ĕçлеççĕ. Петрозаводскра финсен çамрăк театрĕ пысăк çитĕнӳпе ĕçлет. Район центрĕнче—Медвежьегорскра республикăри музыкăллă комедин театрĕ уçăлнă.

Государство хорĕ, симфониллĕ оркестр, кантелистсен ансамблĕ ĕçлет. Виппури хулинче республика филармонийĕн филиалĕ уçăлать.

Комсомолецăн ытти çамрăксемшĕн примерлă пулмалла

Комсомол пуçламăш организацийĕсем ку вăхăтчен промышленность çине çавăрăнса пăхман. Артельсенчи организацисем пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, чĕртаварсене перекетлĕ тыткаласа, тĕрĕс усă курассишĕн сахал кĕрешнĕ. Артельсен мастерскойĕсенче комсомолецсем плана тултарассишĕн, производствăри культурлăхăн пример кăтартман. Çаксене кăтартса пачĕ комсомол активĕн Красноармейски районри пухăвĕ.

Районра куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç çаплах начар тăрать. Колхозсем валли транспорт инвентарĕсем сахал туса кăларççĕ. Артель туса кăларакан таварсем хаклă. Акă, Вутланти «Красное знамя» артели туса кăларакан чăпта сумка базартинчен икĕ хут хаклă, апла пулсан та унăн пахалăхĕ начар.

Комсомол организацийĕсем тата уйрăм комсомолецсем вăрман хатĕрлевне сахал хутшăнаççĕ. Яманкри «Красное Сормово» колхозри пуçламăш организацинче 19 комсомолец Анчах вĕсенчен пĕр комсомолец кăна вăрманта ĕçлет. Упири «Коммунар» колхозри Михайлов, Николаева комсомолецсем вăрмантан ĕçлеме пăрахса кайнă.

Районри колхозсем тата машинно-тракторнăй станци çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен никам та нимĕнле сăмах уçса калама пултараймасть.

Комсомол организацийĕсен тата комсомолецсен предприятисемпе колхозсенче XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пуçламăш парторганизацисене пулăшса пымалла, кашни комсомолецăн производствăра стахановла ĕçлемелле, ыттисене пример кăтартмалла.

П. МАЙОРОВ.

Комсомолка-бригадирсем

Шупашкарти эрех заводĕнчи рабочисенчен çурри ытла хĕрарăмсем шутланаççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче хăйсен ĕçне юратса, тӳрĕ кăмăлпа тăвакан, производствăллă плана ытлашшипех тултарса ĕçлекенсем—стахановкăсем сахал мар, хĕрарăмсем хушшинче кăтартуллăн ĕçлекен бригадирсем те пур.

Комсомолка К. Кузьмина заводра 5 çул хушши ĕçлет. Малтанхи вăхăтра нăл посудăсем çăвакан цехра ĕçленĕ, халĕ разливочнăй цехра бригадир пулса ĕçлет. Кузьмина ертсе пыракан иккĕмĕш номерлĕ бригада кулленхи нормăна 120—125 процент тултарать. Бригада график тăрăх ĕçлеме тытăннăранпа ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ, çавна май рабочисен ĕçукçийĕ хăпарса пырать.

Захарова комсомолка та бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади Кузьмина бригадинчен кая юлмасть. Комсомолкăсем ертсе пыракан бригадăсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕнче брак пулмасть.

Кузьминапа Захарова юлташсем заводра ĕçлесе ӳснĕ, çавăнтах комсомолретне кĕнĕ. Вĕсем ĕçре ытти сене пример кăтартаççĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ пулса иртнĕ хыççăн Кузьмина тата Захарова юлташсем чи малтан цехсенче тасалăхпа йĕркелĕх тунă. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче вĕсем рабочисемпе работницăсене хаçат-журнадсем вуласа параççĕ. Çавăнпа Кузьмина тата Захарова юлташсене рабочисемпе работницăсем юратаççĕ, ытти бригадăсем хăйсен ĕçĕнче вĕсен опычĕсемпе усă курма тăрăшаççĕ.

ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Элĕкре „проектсем“ тăваççĕ

Спортăн хĕллехи сезонĕ вăхăтĕнче йĕлтĕрсем кирлĕ пулнă. Вĕсене лавкасенче тупса илме çук. Çакăн çинчен пĕр хаçатра заметка пичетленсе тухнă, районри обозоремонтнăй мастерскойсенче кирлĕ чухлĕ йĕлтĕрсем туса кăларма май пурри çине кăтартса панă. Ун пирки ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче ыйту лартнă. Тухса калаçма чарăннă хыççăн резолюци проектне вуланă. Вăл проектра кĕтмен çĕртен «...срочно наладить производство лыж», —тенĕ вырăн сиксе тухнă.

— Пастай, — тенĕ пĕри,—«срочно» сăмаха кăларса пăрахмалла пулать. «Срочно» тени вăл йĕлтĕрсем туса кăларассине халех йĕркелесе ямаллине пĕлтерет. Халех пулмĕ вăл, çитес хĕлччен тытăнсан та кая мар...

— Хурататпăр. «Срочно» сăмах, каланă пек, мĕн тума кирлĕ?

Çапла вара, вырăнти промышленность ĕçĕ районра халĕ те тивĕçлипе сарăлса пыраймасть. «Вăхăт пур халь» тесе, партипе совет организацийĕсем резолюцисемпе постановленисем йышăннипех лăпланса лараççĕ. Анчах вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма тытăнман.

Чĕртаварсем вырăнтах çитеççĕ. Обозоремонтнăй мастерскойсем вăрмантан ăякра мар, вĕсем районри колхозсем валли кирлĕ чухлĕ урапасем, çунасем туса кăларма пултараççĕ. Йĕлтĕрсене, кĕреçесемпе кĕвентесене йытти, аякри районсенчен «импорт» тумасăрах, вырăнти мастерскойсемпе артельсенче туса кăларма паха майсем пур.

Продовольстви таварĕсене туса кăларасси çинчен те çавнах каламалла. Парник хуçалăхне сарса пымалла. Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе сысна самăртма пулать, кайăк-кĕшĕк, пулă...

Районра ăста çынсем нумай. Столярсем, çĕвĕçсем, тимĕрçсем çитменни çинчен никам та нимĕнле сăмах уçса калама пултараймасть.

Вырăнти промышленноçа сарса пыма кансĕрлекен нимĕнле чăрмавсем те çук. Ун пек чăрмавсене «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановленире йăлтах сирсе пăрахнă, вăраха ямасăр вырăнти промышленноçа татăклăнах хăпартма кирлĕ условисене пурне те туса панă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ февралĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртес май, районра чылай мероприятисем туса иртерме палăртнă. Элĕкре тимĕр-тăмăр тата вĕрен явакан çĕнĕ мастерскойсем уçмалла. Ку мастерскойсене июль уйăхĕнче ĕçе ямалла. Строительство вырăнĕсене палăртнă тата строительство валли укçа-тенкĕ уйăрнă. Çириккассинчи обозоремонтнăй мастерскойне анлăлатмалла, тимĕрç цехĕ пулать. Пищекомбинат тутлă шывсем туса кăларма тытăнать, пахча-çимĕçсем типĕтме пуçлать. Районри мастерскойсемпе промартельсем катка-пичкесем тата хуçалăхра кирлĕ ытти таварсене туса кăларма пуçламалла. Артельсемпе мастерскойсене чĕртаварсем турттарса пама вĕсем çумне уйрăм колхозсене çирĕплетнĕ.

Районра халĕ ку çĕнĕ предприятисем тунă çĕре валли строительство материалĕсем турттарма тытăнмалла пек, оборудованисене кӳрсе килмелле. Анчах халĕ строительство графикĕсем хатĕр мар.

Мăн Вылăри колхозра кирпĕч производстви уçăлать. Вăл çулталăкра 60 пин кирпĕч туса кăларма палăртнă. Актайри колхоз известка туса кăларма, Яшуткăри колхоз канатпа вĕрен явакан артель уçма, Изванкино, Раскильдино, Шĕнтреш ялĕсенчи колхозсенче кирпĕч сарайĕсем лартма пăхнă.

Çаксем йăлтах халĕ «ĕмĕтсем» вырăнĕнче шутланаççĕ, вĕсене райпланра «проектсем» теççĕ. Райпланра Вырăс Сормĕнчи «Доброволец» колхозра гидроэлектростанци лартма «проект» тунă, колхоз правленийĕ ку «проекта» йышăнмасть, строительство патĕнче ĕçлеме колхозра «ытлашши çынсем çук» тесе кутăнланса тăрать.

1941 çулта районра 66 сысна тăрантарса самăртма задани çирĕплетнĕ, вăл шутран сĕт-çу заводчĕн 9 пуç, пищекомбинатăн 15, Элĕкри сельпон 25, Тавăтри сельпон 9, ача-пăча учрежденийĕсен 4 пуç сысна самăртмалла. Вĕсен сыснасем самăртма отходсем сахал мар пулаççĕ. Ку енĕпе халĕ нимĕн те тумаççĕ. Сыснасем усрамалли вырăнсене те хатĕрлемеççĕ, сыснасене те сутăн илмеççĕ.

Колхозсене пулă ĕрчетме пĕвесем тума тата пулă тытма заданисем панă. Районра пĕтĕмпе çĕнĕрен 12,54 гектар çинче шыв тăмалла пĕвесемпе кӳлĕсем тумалла. Пулă питомникĕ Эренарта, кӳлĕсемпе пĕвесем 9 колхозра пулмалла, 9020 штука зеркальнăй карпсем шыва ямалла.

Ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ таран туса кăларасси вырăнти ресурссемпе туллин усă курнинчен чылай килет. Вăл ресурссемпе усă курнă çĕрте партипе совет организацийĕсен руководителĕсен хăйсен пуçарулăхĕсене кăтартса пымалла, социализмлă ăмăртăва сарса пымалла.

Районри предприятисемпе артельсенче социализмлă ăмăрту хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнса тăраймасть. Чылай артельсем хăйсем, унпа пĕрлех вăл артельсенче ĕçлекенсем ăмăрту тулашне тăрса юлнă. Чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли пур майсемпе те туллин усă курмаççĕ. Юлашки вăхăтра пищекомбинат енчен чĕртавар çук тесе ĕçлемесĕр ларнисем те пулнă. Тĕрĕссипе чĕртавар пур çинчех, ăна вырăнсенчен вăхăтра кӳрсе килмесĕр тăнă.

Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем пирки СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Карело-финн халăхĕн «Калевала» ятлă эпосĕнчи герой Вайнемейнен ячĕпе тăракан Сортавала хулинче лартнă памятник. Я. РОСКИН фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Сӳтсе-явни сахал, конкретлă ĕç кирлĕ

Шăмăршă районĕнчи халăх хуçалăхĕнче промкомбинат тата вăрманпромхоз пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Районри промышленность пĕтĕмĕшпе илсен 1940 çулти плана 77,9 процент кăна тултарнă. Уйрăмăн илсен, промкомбинатăн обозоремонтнăй мастерскойĕ иртнĕ çулти çулталăк планне 78 процент, райлесзаг 52 процент, вăрманпромхоз 81 процент çеç тултарнă.

Вăрманпромхоз 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне (мартăн 17-мĕшне) хатĕрлессипе 67,7 процент, турттарассипе 54,2 процент тата кирлĕ пунктсем патне турттарса кăларассипе 51,5 процент çеç тултарнă. Вăрманта 1000 лаша ĕçлес вырăнне мартăн 17-мĕшĕнче 412 лаша çеç ĕçленĕ, единоличниксем 38 çын çуран, лашапа 15 çын ĕçленĕ.

Районри предприятисем халĕ те штурмовщинăпа ĕçлеççĕ. Кварталăн малтанхи декадисенче вырăнтан хускалмаççĕ, кварталăн юлашки уйăхĕнче вара шавлама, штурмлама тытăнаççĕ. Акă, промкомбинатăн столярнăй цехĕ 1940 çулти пĕрремĕш квартал планне 9 процент, юлашки тăваттăмĕш квартал планне вара 43,6 процент тултарнă, вăрманпромхоз та çавах.

Штурмовщинăпа ĕçлессине пĕтересси çинчен парти пухăвĕ уйрăмах çирĕппĕн кăтартса хăварчĕ. Шăмăршă районĕнче ВКП(б) XVIII конференцийĕ хыççăн та штурмлас йĕркепе пĕтмен-ха. Район вăрман хатĕрлевĕпе кая юлнă. Çавăнпа та март уйăхĕнче нихăçан пулман «вăйлă» штурм пуçланчĕ. Заняти вăхăтĕнчех служащисене райкома канашлăва чĕнсе, инструкци парса ялсене вуншар çын кăларса яраççĕ. Мартăн 17-мĕшĕнче райкома кăнтăрла тĕлĕнче (12 сехетре) 19 çын чĕнсе 10 кунлăха ялсене кăларса ячĕç, çав кунах тепĕр сехетрен татах 8 çынна вăрмана агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелеме кăларса ячĕç. Вĕсене вăрман хатĕрлес плана тултармасăр Шăмăршăна таврăнма хушман.

Халĕ Шăмăршă районĕ ура çине тăнă. Январь тата февраль уйăхĕсенче вăрман хатĕрлевĕн планне тултарасси çинчен сахалтарах калаçнă пулсан, халĕ ытти ĕçсене манса хăварсах вăрман, вăрман, теççĕ. Колхозниксем çуракине çителĕксĕр хатĕрленеççĕ, апла пулин те ку ĕçе айккине хăварнă.

Шупашкар совхозĕнче

Шупашкар совхозĕнче çулленех пахча-çимĕçсем йышлăн туса илеççĕ. Иртнĕ çулта пахча-çимĕçсем сутса 70 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал та парниксенче тахçанах хĕрӳллĕ ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Мĕнпурĕ 800 рама ытла пахча-çимĕç калчисем лартса тăваççĕ. Хула ĕççыннисемпе колхозсем валли те пахча-çимĕç калчисем чылай хатĕрлеççĕ. Пĕр купăстапа помидор калчисене кăна 50 пин тĕп сутма палăртнă.

Мартăн 26-мĕшĕнчен тытăнса пур парниксенче те ĕçсем пуçланнă. Совхозра специалистсем çителĕклĕ. Халĕ унта 7 агроном ĕçлет. Вĕсенчен хăшпĕрисем 14—19 çул хушши пĕр вырăнтах ĕçлеççĕ. Акă Александр Гурьев агроном-овощевод пулса совхозра 19 çул, Андреев агроном-садовод 13 çул хушши ĕçлет. Çак специалистсем хăйсен ĕçне чĕререн юратаççĕ, вĕсен опытсем те пысăк, совхозăн кашни тăваткăл çĕр лаптăкĕ мĕнлине лайăх вĕренсе çитнĕ, рабочисене яланах тимлĕн ĕçлеме вĕрентсе пыраççĕ. Çак хĕлте рабочисенчен 15 çынна Мускава ярса икĕ уйăхлăх курсра вĕрентсе хатĕрленĕ.

Совхозри рабочисем валли столовăй ĕçлеме тытăнмалла. Апат-çимĕç продукчĕсем хатĕр. Çак кунсенче совхозра пĕрремĕш çул ачасен сачĕпе ясли ĕçлеме пуçланă. Унта совхозри рабочисен ачисем çӳреççĕ.

Совхозăн парниксемпе питомникре ĕçлемелли инвентарьсем çителĕклĕ, вĕсене кĕркуннех юсанă. Туртăм вăйăсем те совхозăн хăйĕннех çитет, вĕсем валли апат-çимĕçсем çителĕклĕ. Хĕллехи вăхăтра торфпа тислĕк 5 пин те 200 тонна кăларнă, 86 тонна минерал удобренисем кӳрсе килнĕ.

Кăçал совхозра пĕрремĕш çул 100 пин тĕп виноград лартма хатĕрленеççĕ. Ывăççисем çитес уйăхра Шупашкара çитмелле.

Çитменлĕхсене те палăртмалла. Совхозăн пахча-çимĕç вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Парниксемпе питомникре ĕçлеме рабочисене илсе çитереймен. Çавăн пекех, рабочисем валли хваттерсем те çитмеççĕ.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Ялхуçалăх специалисчĕсем вĕренсе тухаççĕ

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ кăçал çуркунне полеводсен факультетĕнчи V-мĕш курсри студентсене вĕрентсе кăларать. Институтран пурĕ 36 студент вĕренсе тухма хатĕрленеççĕ.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ институтран вĕренсе тухакансене ĕçлеме хирĕç кĕрешмелли пункт уçăлнă. Республикăри больницăсенчи койкăсен хисепĕ 1.500 койка ытла ӳсет, ача-пăчапа хĕрарăм консультацийĕсем 11 консультаци, сĕт кухнисем уçăлаççĕ.

Советлă Эстонири сывлăха сыхлас ĕç

Кăçалхи çул Советлă Эстонире халăх сывлăхне сыхлас ĕçре 70 миллион тенкĕ яхăн расход тăваççĕ. Таллинра больница туса пĕтереççĕ, поликлиника валли çурт тăваççĕ. Нарвăра 4 больница, поликлиника, ача яслисем, темиçе амбулатори, туберкулеза хирĕç кĕрешмелли пункт уçăлнă. Республикăри больницăсенчи койкăсен хисепĕ 1.500 койка ытла ӳсет, ача-пăчапа хĕрарăм консультацийĕсем 11 консультаци, сĕт кухнисем уçăлаççĕ.

Стена хаçачĕсене пăхса тухнă хыççăн

„Красный металлист“ хаçат—социализмлă ăмăрту организаторĕ

Производствăри стена хаçачĕсен умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри вăл социализмлă ăмăртăва сарса пырса малта пыракансен паха опычĕсемпе ытти рабочисене ĕçлеме вĕрентесси, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пĕтĕм коллектива стахановла ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешесси пулса тăрать.

Çак ответлă та хисеплĕ задачăна «Красный металлист» стена хаçачĕн (Çĕмĕрле комбинатĕнчи механически цех) редколлеги членĕсем лайăх ăнланса илнĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе «Красный металлист» хаçат чăн-чăнах социализмлă ăмăртупа стахановла движени организаторĕ пулса тăчĕ. Хаçат производствăран уйăрăлмасть, ытăвата тĕрĕс, витĕмлĕ çутатса парассишĕн тăрăшать. Ахальтен мар ĕнтĕ кашни рабочи вăл хаçат тухасса кĕтсех тăрать, ăна тĕплĕн вуласа тухать.

Цехра кам лайăх ĕçлет, кам юлса пырать? Мĕнле çитменлĕхсем пур, вĕсем камран килеççĕ? Çаксене хаçатăн кашни номерĕнчех курма пулать.

Акă, пирĕн умра 4-мĕш номер. Ана февралĕн малтанхи кунĕсенче кăларнă. Кунта пĕтĕмпе 6 заметка тухнă. Унтан статья вырăнĕнче цех начальникĕ Ситулин юлташ çырнă «Партин XVIII конференцийĕ умĕн» ятлă заметка. Автор ыйтăва питех те тĕрĕс çутатса парать. «Пирĕн задача,—тенĕ заметкăра,—партконференцине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесси. Эпир хамăр çине февраль уйăх планне срокчен тултарма обязательство илтĕмĕр. Çавна пирĕн пурнăçламалла». Малалла илнĕ обязательствăна тултарас пулсан, кашни рабочин ăмăртăва сарса пымалли çинчен, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курмалли çинчен каласа парать.

Сабановпа Леонтьев тата Евсеев юлташсем цехри уйрăм рабочисен çитменлĕхĕсем çинчен çыраççĕ. Липатов юлташ рабочисем хушшинче çар ĕçне вĕренес ĕç мĕнле пыни çинчен каласа кăтартать.

Çак номертех карикатурăсем те пур. Пурте пĕчĕк вырăн çеç йышăнаççĕ, анчах интереслĕ.

Февралĕн 15-мĕшĕнче 5-мĕш номер тухнă. Кунта пĕтĕм хаçачĕпе тенĕ пекех, пĕр ыйту тăрăх—цех коллективĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине мĕнле кĕтсе илни çинчен çутатнă. «Цех коллективĕ палăлă куна çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ,—тесе çырать хаçат.—Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче эпир ĕç тухăçлăхне 154 процент ӳстернĕ пулсан, январь уйăхĕнче вара 167 процента çитертĕмĕр. Юлашки вăхăтра цехра палăлă стахановецсем ӳссе çитĕнчĕç. Слохин, Кочнев, Кузнецов т. ыт. юлташсем ĕçре пример кăтартаççĕ».

Çак номертех Липатов юлташ «Пирĕн обязательствăсем» ятлă заметкăра цех февраль уйăх планне 15 кун хушшинче 88,5 процент тултарни çинчен, материалсем пулман пирки простойсем пулни çинчен çутатса парать. «Емелин юлташ смени малта» ятлă заметкăра пĕр смена стахановла ĕçлени çинчен, «Варя Сулимова» ятлă заметкăра Сулимова юлташ чугунçула таса тытнине тĕплĕн çырса кăтартнă.

Хаçата пăхсан цех ĕçĕ пĕтĕмпех курăнать, пур участокри ĕçсем çинчен те çутатнă.

Хаçатăн 6—7—8—9-мĕш номерĕсенче партконференци решенийĕсене цехра мĕнле пурнăçласа пыни çинчен çырнă. Кашни номертех уйрăм çитменлĕхсене уçса палăртать, стахановецсем опычĕсем çинчен каласа парать. Çапла, сăмахран, 8-мĕш номерте диспетчер Горяев юлташ технически контроль отделĕ брак детальсенех йышăнни çинчен, Липатов юлташ—хăшпĕр смена мастерĕсем тасалăхпăн ĕçлемелли çинчен, Гр. Леонтьев мастер айĕпĕне рабочисем простой туни çинчен çырса кăларнă. Çав заметкăсемпе ĕнтĕ хаçат цех коллективĕ умне çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе производство планне пур тĕслĕхсем тăрăх та йĕркеллĕн тултарса пырас задачăна кăларса тăратать.

«Красный металлист» хаçат уйăхра 3 хут тухать. Вăтаман ихсен кашни номертех 5—6 заметка пичетленет. Пысăк мар вĕсем, 6—15 строка çеç йышăнаççĕ. Кусемсĕр пуçне тата тăтăшах карикатурăсем пулаççĕ. Ку уйрăмăнах хаçат сăнлăхне илемлетет.

Хаçат хăй тавра пĕтĕм массăна явăçтарать. Унта цех начальникĕнчен пуçласа рядовой рабочине, уборщицăна çитменчен çырса тăраççĕ. Цех начальникĕ Ситулин, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Липатов, комсомолăн пуçламăш организацийĕн секретарĕ Хорычева, смена мастерĕсем Евсеев, Емелин, диспетчер Горяев, рабочисем Сабанов, Атлин т. ыт. те хаçатăн активлă корреспонденчĕсем шутланаççĕ.

Редколлеги составĕнче 5 çын. Г. Хорычева (отв. редактор), слесарь Блохин, статистик Сорокина, рабочи Кирсанов, мастер Милорадовский юлташсем. Кашниех хăйне панă ĕçе вăхăтра тата йĕркеллĕ пурнăçлать. Кирсанов юлташ хаçатра картинăсемпе карикатурăсем тăвас енĕпе ĕçлет, Милорадовский юлташ заметкăсене тӳрлетет т. ыт.

— Эпир хаçат кăларма пуçличчен малтан пĕрле пухăнса заметкăсене тăхса тухатпăр. Паллах, хаçатра пуринне те усă курма май çук. Хăшне вара эпир тĕрĕслесе мера йышăнма яратпăр, тепринне браклама та лекет. Хаçата план тăрăх кăларатпăр,—тет «Красный металлист» стена хаçачĕн редакторĕ, комсомолка Хорычева юлташ.

«Красный металлист» пысăк ĕçсем тăвать. Вăл цехра çитменлĕхсене пĕтерес, социализмлă ăмăртупа стахановла движенине сарса пырас тĕллĕпне хытă кĕрешет. Ахальтен мар ĕнтĕ механически цех хăйĕн производство планне кашни уйăхрах иртерсе тултарать.

Хар. ЛИСИЙ.

ЗЕМСКИ НАЧАЛЬНИК

(Ватă колхозниксем каласа панă тăрăх çырнă)

Патша Российĕнче ĕçхалăхĕн пурнăçĕ тӳсме çук йывăр пусмăрлă пулнă. «Рабочисемпе хресченсем çинче исправниксен, урядниксен, жандармсен, полицейскисен, стражниксен пысăк çарĕ тăнă; вĕсем ĕççыннисене, эксплоатацилененсене хирĕç пынă, патшана, капиталистсене, помещиксене сыхласа тăнă». («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», чăвашла изд., стр. 6).

Земски начальниксем те çавăн пек халăх юнне ĕçсе пурăннă сĕлĕхсемех пулнă. Вĕсем—Столыпин законне вырăнсенче пурнăçа кĕртекенсем пулнă. Çав закон тăрăх чи лайăх çĕрсене ялти кулаксене касса панă, патша правительстви кулаксене хăйĕн ялти çынсĕп тĕрекĕ туса хума тăрăшнă. Кулаксем вара патша влаçĕн çавăн пек тĕрекĕ пулса тăнă та.

Чăваш ĕçхресченĕсене мăшкăлласа, пусмăрласа пурăннă земски начальниксенчен пĕри Пантусов пулнă. Вăл 1905—1915 çулсенче Языково участокĕнче земски начальник пулса пурăннă. Çав участока Аттайпа Хĕрлĕ Чутай вулăсĕсенчи (вăл вăхăтри Кăрмăш уезчĕ) чăваш ялĕсем те кĕнĕ. Кăтартнă вулăссенче пулнă ялсем хальхи вăхăтра Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Калинински районĕсене кĕреççĕ.

Столыпин законне тĕрĕс кĕртес тĕлĕшпе, Пантусов хăйĕн участокне кĕрекен чăваш ялĕсенче те пуян хресченсене, кулаксене, лайăх çĕрсем касса парса, хуторсем тума вăйлăн пулăшнă. Нумай пуянсем, кулаксем—хуторсем хуçисем, помещиксем—патша самодержавине тĕрĕссĕн сыхласа тăракансем пулса тăнă. Вĕсен шутĕнче Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялĕнчен Петр Лукин; Тукас ялĕнчен—Гаврил Толстов, Кондратий Виссарионов; Янташ ялĕнчен—Петр Кондратьев, Александр Кондратьев тата ыттисем те чылай пулнă.

Çав вăхăтрах чухăн пурăнакан хресченсем нумайĕшĕ çĕрсĕр тăрса юлнă. Сăмахран, Тукасри хутор хуçи, кулак Толстов, улталаса йӳнĕ хакпа çĕрсене илсе 20 хресчене çĕрсĕр тăратса хăварнă.

Толстов йышшисем Пантусовăн тата патшан ытти йыттисем ялти тусĕсем пулнă. Вĕсем патĕнче Пантусовсем ĕçнĕ тата алхаснă.

Пантусова хальхи вăхăтра та чылайĕшĕ астăваççĕ. Вăл нихăçан та урăлман киревсĕр çын пулнă. Вăл ĕççыннисенчен намăса пĕлмесĕр мăшкăлланă, пусмăрланă, кӳрентернĕ, кулнă. Унăн киревсĕр мăшкăлĕсем çинчен астăвансем нумай каласа параççĕ. Акă, Турхан ялĕнчи колхозник Семен Ульгев çапла каласа парать:

— 1910—1911 çулсенче пулас, эпир Турхан лесничествинче вăрман касатпăр. Пирĕн делянка Улхаша каякан мăн çул хĕрринчех-чĕ. Шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, виçĕ лаша кӳлнĕ карета пирĕн тĕлле çитсе чарăнчĕ. Каретăран ӳсĕр земски начальник Пантусов сĕтĕрĕнсе тухрĕ. Пирĕнтен пĕрне, Лариван теттĕмĕр ăна, чĕнчĕ, ăна саламатпа пĕрре çурăм тăрăх тăсса илчĕ те, хăйĕн шалавар тӳммисене вĕçертме хушрĕ. Кайран пуçтарса, майласа, хăпартса лартма та Лариванах лекрĕ. Земски начальнике ăсатнă хыççăн, эпир çамрăксем, Лариванран кулма тытăнтăмăр. Анчах ваттисем пире чарса, земски начальник мăшкăлĕ çинчен каласа пуçларĕç.

— Эпир йĕп-йĕпе тара ӳксе ĕçлетпĕр, вăл пирĕнтен мăшкăллать. Çитĕха вăхăт, шалчи тулĕ!—теççĕ унчухнех хресченсем.

Çĕнькас ялĕнчи колхозник Стафик Дмитрий Романович тата çакăн пек истори çинчен каласа парать:

—1906—1907 çулсенче, хутла вăйлах пĕлмен пулин те, ялта хутла пĕлекен çук пирки, Пренеш обществинче ял писарĕнче пурăнтăм. Ял писарĕсене вăл вăхăтра земски начальник тĕрĕслет. Ревизи тума пире пĕтĕм кĕнекесене хăй патне, Языковăна, илсе пыма хушрĕ. Кĕнекесем вăл вăхăтра пит нумайччĕ, çавăнпа та эпĕ кĕнекесене лав çине тиесе Пренешрен Языковăна (25 çухрăма) кайрăм. Языковăна çитсен Пантусов патне кĕнекесене йăтса хăра-хăрах, чĕтресе, ура вĕççĕн кĕрсе тăтăм. Пантусов, ӳсĕрскер, хăйĕн канцелярине ытти ялсенчен килнĕ писарьсемпе харкашса, вăрçса ларать. Ман кĕнекесене илсе пăхма тытăнсан урнă йытă евĕрлĕ кăшкăрса пăрахрĕ. Эпĕ ун çине пăхса илме ĕлкĕртĕм: сăн-пичĕ хĕп-хĕрлĕ, курпун сăмса сысна шăрчĕ пек тăракан çӳçĕсем, чарăлса кайнă куçĕсем... Ман çине вăл çынçинен пекех пăхса илчĕ.

— Это что?.. Болван!..—тесе кăшкăрать. Пĕр кĕнеки çине кăшт чернил тăкăнса вараланнине курнă вăл.

— Виноват, ачасем чернил тăкса вараланă,—тесе ответлерĕм. Унччен те пулмарĕ, ман пит çине кĕнеке пырса çапăнчĕ. Ытти кĕнекесем те пурте урайне сапаланчĕç.

— На 14 суток арест!—кăшкăрчĕ земски начальник.

Кăшт тăрсан:

— Ытăсене хупмалли витесене, сырмаран тăм йăтса, юсаттарăр!—тесе хушрĕ.

Мана илсе тухса кайрĕç. Çак земски начальникĕн, Пантусовăн, 40 йытă пулнă. Вара çав йытăсен витисене сырмаран тăм йăтса юсаса, çирĕплетсе лартрăм. Ытăтисем те хăй пекех усалччĕ, хаярччĕ. Темиçе çĕртен мана сырта-сырта сусăрлатрĕç.

Турхан ялĕнчи колхозник, 75 çулхи старик Моисеев Евграф Николаевич та земски начальник çинчен çапла каласа парать:

— 1906 çулта Хутара земски начальник Пантусов удельнăй тырри пуçтартарма килнĕ. Вăл ялти старостăсене, вахтăрсене пуçтарнă. Хăй яланхи пекех ӳсĕр. Тырă мĕншĕн ку вăхăтчен хывса пĕтерместĕр тесе çĕмĕрттерет. Октябрĕн 1-мĕш тĕлне хывса пĕтермелле тесе кăшкăрать. Пухăннисем пурте шăп тăраççĕ, нимĕн те калама хăймаççĕ, хăраççĕ. Эпĕ хăйса маларах тухрăм та çапла каларăм:

— Пуррисем хыврĕç, çуккисем хывăймаççĕ, хăйсене çиме те çитеймест, ăçал тырă начар пулчĕ,—терĕм.

— Молчать!.. В Языково!.. 14 суток арест!..—мĕкĕрчĕ земски начальник. Ман пата çавăнтах икĕ десятник пырса та тăчĕç. Вара мана арестлесе Хутартан Языковăна (30 çухрăм) çуранах икĕ десятникпа ăсатрĕç. Хутартан тухсан пĕр 2 çухрăм кайсан земски начальник Пантусов тройкăпа пире хăваласа та çитрĕ. Кĕрхи çанталăк, паллах, çумăр питĕ хытă çăвать. Эпĕ чĕркуçланса ларса: «Мана хăварăр, ачасем вĕтĕ, килте ĕçлекен çук», тесе ӳкĕтлесе ыйтса та пăхрăм. Анчах çук, нимĕн те пулăшмарĕ.

— Тепре тата çапла пулчĕ,—калама тытăнчĕ малалла Евграф Николаевич.—Штанашра вулăсри старшинана суйлама вулăс пухăнине пуçтарăннă. Çав земски начальник Пантусов Кăрмăшран (унчухне вăл уезд хули пулнă) çитрĕ. Каллех ӳсĕр. Унăн, Пантусовăн, Языковăра Маша ятлă еркĕнĕ пулнă. Вăл ăна курастăн пулнă иккен Вара Штанашран вулăс ямшăкне Федор Иванович Смирнова Языковăна Машăна илме пар лашапа ячĕ. (Штанашпа Языково хушши 50 çухрăм) Вулăс правленинчех «дворянски» текен уйрăм пӳлĕм пурччĕ. Машăна илсе килсен, çав «дворянски» пӳлĕмре çĕрĕпех алхасрĕç. Ытлашши эрех кӳпсе тултарнипе земски начальник «дворянскине» вараласа пĕтернĕ. Ирхине сторăж вăрçа-вăрçа тасатать...

Çапла патша чиновникĕсенчен пĕри—Пантусов — ĕççыннисенчен, халăхран мăшкăлласа, этем вырăнне хумасăр пусмăрласа пурăннă. Анчах вĕсен тăпи тулчĕ. Коммунистсен партийĕ, унăн çулпуçĕсем Ленин тата Сталин ертсе пынипе ĕçхалăхĕ 1917 çулта Пантусовсене тымарĕпех кăкласа ывăтрĕ.

ИВАН МОИСЕЕВ.

М. Ю. Лермонтов

сăввисем

Виçĕ пальма

Виç пальма Арави çеçенхирĕнче
Мăнкăмăллăн ларнă, çӳле çитĕнсе.
Вĕсен хушшинче, тек хăватлăн
та сиввĕн
Çĕр айĕн тухса, юхăмланнă çăл шывĕ.
Сыхланнă вăл çак йывăççен хӳттинче
Шевле вăйăпинчен те çил хăйăрĕнчен.

Çул хыççăн çул иртнĕ хуллен шăвăнса.
Инçе çĕршывран килекен—ывăнса,
Çак сулхăн çĕрте чăрăнман мĕн
нихăçан та,
Аш хыпнипе çăл шывне тутанман-тăр?
Пуçланă типме сивĕ çăл шăрăхпа,
Хитре çулçăсем ытăннă сарăхма.

Пуçланă виç пальма турра ылханма:
«Мĕскершĕн ӳстертĕн çапла çеç
хăрма?
Çак пушă хирте ӳснĕ усă памасăр —
Çил-тăвăл туллать, пĕçертет шăрăх
майсăр,
Пире кураймасть нихăш çĕрĕн сынни...
Тупе, тĕрĕс мар эс çапла йышăнни!»

Вĕсем лăплансассăн—кăвак инçетре
Юпа пек çĕкленнĕ шур хăйăр çĕртрен
Шăнкăрав сассисем те пĕр вĕçсĕр
янранă,
Сывхарнă хуллен тĕвесен караванĕ—
Мăн тинĕс çинчи кимĕ пек, тĕвесем
Сулланнă пĕрмай, хăйăра сирпĕтсе.

Тек пынă хыткан курпунсем
хушшинче
Тĕрленĕ çитти аркисем чĕтренсе.
Хăш чух вĕсене тĕссĕр алă хăпартнă,
Çитти ăшĕнчен сут куçсем
йăлтăртатнă...
Иĕнерĕ çине таянса, мал енне
Араб хăваланă хура лашине.

Чĕвеннĕ те сикнĕ ун учĕ хĕрсе,
Çĕмрен йĕппипе суранлатнă барс пек.
Шур тумăн хитре пĕрмечийĕсем
ваннăн
Фарис хулпуççийĕ çинче сапаланнă,
Вăл кăшкăрнă—шăхăрнă, хунă утне,
Пăрахнă та тытнă унтах сăннине.

Çитсен виçĕ пальма патне, караван
Канмашкăн шут тытнă—ку
вырăн аван.
Шыври кăкшăмсем пăкăртатнă
та тулнă,
Хăнийĕсене саламланă татуллăн
Тек пусĕсене сулласа пальмăсем,
Çăл тăнă шывне тараватлăн сĕнсе.

Каç сĕмĕ килсен, çивĕч пуртă сиксе
Пуçланă касма—пĕтнĕ вăй пальмăсен:
Çĕр çул çирĕпленнĕскерсем
хăвăрт вилнĕ,
Вĕсен тумтирне ачасем сӳсе илнĕ,
Кайран ӳт-пĕвне вакласа, ерипен
Сунтарнă вутра тул çути киличчен.

Тĕтре сирĕлсен хĕвеланăç енне,
Каллех караван тăснă хăйĕн çулне.
Хыçран çĕр çинче унăн йĕрĕ
салхуллăн
Кăвакă та сивĕ кĕл çеç пулса юлнă.
Сунтарнă хĕвел юлашки юлнине,
Салатнă хир тăрăх çил кĕлĕсене.

Унта халĕ пушă, пăхма та кичем,
Тек пăшăлтатмасçĕ çăлпа çулçăсем.
Çăл ахалех пророкран сулхăн ыйтĕ—
Вĕри хăйăр çеç курăнми ăна витĕ.
Вара ун çинче хытанка хурчăка
Туртклĕ хăй тытнă пĕр-пĕр кайăка.

Тискер çурçĕрте...

Тискер çурçĕрте пĕрпĕччен,
пит кичеммĕн
Çара ту çинче хыр ларать;
Пас тытнипе курăнать риза уртнăн,
Хуллен тĕлĕрет ыйхăра.
Ана курăнать пушă хирĕн илемĕ,
Инçет хĕвелтухăçĕнче
Вĕри ту çинче çитĕнет пек
халь уншăн
Пĕр пальма илемлĕн, пĕччен.

Ту-сăртсем çывраççĕ

Ту-сăртсем çывраççĕ
Каç сĕмлĕхĕнче,
Улăхсем çăвнаççĕ
Сывлăм шывĕнче.
Лăпкă çул тусанĕ,
Çулçăсем шăпах;
Эсĕ те кĕç канăн,
Тăхтасам пăртак.

В. УСЛИ куçарнă.

Уйра юр шывне тата çăмăр шывне тытса юласси

Юртан ирĕлсе пулнă шыва тытса юлса тăпрана сăрхăнтарни ялхуçалăх культурисĕн тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Метеорологи станцийĕ кăтартса пани тăрăх, февралĕн 20-мĕшне республикăри уйхирсенче вăтам шутпа юр хулăмĕшĕ 21 сантиметртан пуçласа 34 сантиметра çити (нумай хисеппе 30—34 сантиметр) пулнă.

Юртан ирĕлсе пулнă шыв ялхуçалăхне усă памасăр çулсеренех çырмасатрасене юхса каять. Çав вăхăтрах шывпа пĕлсе усă курсан, вăл пысăк усă пама пултарать. Украинăри тата Совет Союзĕнчи ытти колхозсенче те юр шывĕпе çурхи çăмăр шывне тытса юлни тырпул тухăçне ӳстернĕ çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса парать.

Юр шывĕпе усă курса тырпул тухăçне ӳстерни çав ĕçе тума ĕç вăйĕ пĕтернине пĕтĕмпех витет тата ĕçкунĕсен хакне ӳстерет.

Чăваш республикинчи вырăнсем çырма-çатраллă. Çавнашкал вырăнсенче юр шывне тытса усă курасси уйăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та эпир хамăр республикăри колхозсене çурхи тырăсем акмалли лаптăксем çинче, уйăмăнах сĕвеклĕ вырăнсенче, юр шывне тытса юласси тата ăна тăпрана сăрхăнтарасси çинчен паллаштарма кирлĕ тесе шутлатпăр. Чи малтанах, çак çитес кунсенче, сĕвеклĕ вырăнсенче урлă майлă юра купаласа картламалла.

Çакнашкал юра купаласа картлани пысăк сĕвексенче нумайрах пулма кирлĕ. Юра купаласа картлас ĕçе механизацилеме пулать. Çавна май юра сухаламалли тумалла, ун çумне юра хытарса пымалли майлаштарса лартмалла.

Чăнкă сĕвек вырăнсенче юртан картласа тунă вуннăмĕш е çирĕмĕш купа (вырăн мĕнле пулнине кура) ытисенчен сарлакарах пулмалла. Юртан купаласа кашни картланă вырăнта, кашни 30 метртан тухса çӳремеллисем, вĕсем шахмăтла йĕркепе пулмалла.

Юртан купаласа картланă вырăнсем хушшинчи юр хăвăрт ирĕлет, çакă вара тăпрана та чăсрах ăшăнса çитме пулăшать. Купаласа картланă, уйăмăнах çӳлĕ картланă çĕрте, юр ерипен ирĕлет, çавна май вăл юртан пулнă шыва юхса кайма чарса тăрать. тăпра çав шыва пĕтĕмпех хăй çумне туртса илет.

Юртан купаласа картланă вырăнти хушăсенче тăпрана ытлашши типсе кайма памалла мар. Çав вырăнта кушăхсан, вăл шыва сăрхăнтарсан купасене сапаласа пăрахас пулать. Çакна тумасан сĕвеклĕ вырăнсенче тăпра пур çĕрте те пĕр вăхăтра пулса çитеймест. Çакă вара çураки ĕçĕсене вăхăтра тума чăрмантарать, тăпрари нӳрлĕх типет.

Сĕвек вырăнсенче урлă майлă юра купаласа картланă чухне шырлансемпе канавсем тăрăх юхакан шыва та тытса юлассине шута илмелле. Çавна май шырлансемпе канавсене урлă майлă юрпа пĕвелемелле, ăна юра купаласа картланипе çыхăнтармалла. Шырлансемпе канавсем тăрăх юхакан шыв юра купаласа картланă вырăнсем хушшине юхса кайса саланмалла пултăр. Тӳрем е тӳремех мар вырăнсенче юр çийĕн тăпра, кĕл е торф сапса тухаççĕ. Çакăн пек туни те юра хăвăртрах ирĕлтерет. Вĕсене ансăр ретпе 15—20 метр сапса тухас пулать, юр хăвăрт ирĕлсе, тăпра часрах ăшăнать, шыв та тăпрана çийĕнчех сăрхăнать.

Çак ĕçсене кĕрхи çĕртме сухи тунă вырăнсенче кăна ирттермелле. Кĕрхи тырăсем акнă лаптăксем çинче тума юрамасть.

Кĕрхи тырăсем акнă лаптăксем çинче вăрмансем, садсем çывăхĕнче, çавнашкалах çуртĕрсем патĕнче тарăн кĕрт пулать. Çавăн пек çĕрте кĕрхи тырă калчисем çĕрсе пĕтме пултараççĕ. Ун пек ан пултăр тесен юра кĕреçесемпе салатса пăрахмалла.

Кусемпе пĕрлех кăнтăр енче сĕвеклĕ тата сăртлă вырăнсенче юр ытлашши хăвăрт ирĕлесрен сыхланма кирлĕ. Çавна май юра катокпа çиелтен хытарса тухмалла. Хытарнă юр ерипен ирĕлет. Юр ерипен ирĕлтĕр тесен улăмпа витсен те юрать. Çакна маллама мар: çуркунне юр айĕнчен ытлашши ир тухнă калчасем сиенленме е çурхи сивĕпе пĕтме пултараççĕ.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесен çавăн пекех тата юр шывĕпе çурхи çăмăр шывне кĕрхи çĕртме сухи тунă вырăнсене çӳреленипе, тырпулсене акиччен лаптăксене сухаласа çемçетнипе тата обязательно йĕркепе сĕвексенче вăрлăхсене урлă майлă акнипе тытса юлма пулать. Анчах çак ĕç çине республикăри чылай колхозсем ку вăхăтчен питех çавăрăнса пăхман.

Профессор **ПЕЛЬЦИХ.**
Доцентсем: **ТАРЧЕВСКИЙ.**
АНДРЕЕВ.
КРУЖИЛИН.

Çуракине тухма хатĕр тăрар

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри колхозсем çуракине тухма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслени ялхуçалăх машинисемпе ытти инвентарьсене çуракине тухма çителĕксĕр хатĕрленнине кăтартса пачĕ. Районри 30 колхозран плугсене 12 колхоза, сӳресене 16 колхоза çеç юсаса пĕтернĕ тата 9 колхоза сеялкăсене пурне те мар юсанă. 5 колхоза урапасене юсама пачах та тытăнман, 12 колхоза тырă гуттармалли ещĕксене хатĕрлемен. Тырă вырмалли машинăсемпе вăрăм урапасене хăшпĕр колхозсем юр айĕнчен те кăларман. Вăрлăх турттарма михĕ-шăналăк таврашĕсем кирлĕ, анчах «Пламя Октября», «Майăн 1-мĕш», «Кзыл юлдуз» колхозсенче вĕсем çитмеççĕ, пуррисене сапламаççĕ.

Роза Люксембург ячĕпе тăракан, «Майăн 1-мĕш», «Правда» колхозсенче лаша кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ.

«Красное знамя», «Правда» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем машинăсемпе транспорта çуракине тухма хатĕрлес тĕлĕшпе калама çук япăх ĕçлеççĕ. Çак колхозсенче машинăсемпе транспорт хатĕрĕсене юсаса пĕтермен, машинăсен пайĕсем çитмеççĕ пулсан та вĕсене тупма тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче сеялкăсене юсас ĕçе ăна пачах пĕлмен çынсене шанса панă. «Ударник» колхозра сеялкăсене пĕлмен çын юсанă пирки сошниксене тĕрĕс лартман, вăрлăх юхса пымалли хатĕрсем хĕлĕпех юр айĕнче выртнипе мăкăлтанса пĕтнĕ.

Ялхуçалăх машинисемпе транспорт хатĕрĕсене юсас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем те чылай. «Маяк», «Кзыл-тан», «Красный Октябрь» колхозсем малта пырасси, вĕсен лаша кӳлмелли хатĕрсем те çителĕклĕ.

Çуракине тухиччен вăхăт нумай юлмарĕ, пулнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, çуракине тухма пуянчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитес пулать.

Ф. АРХИПОВ.

Учительсем колхоза пулăшаççĕ

Шывпуçĕнчи (Шăхасан районĕ) учительсем Шмидт ячĕпе тăракан колхоза çуракине хатĕрленме лайăх пулăшса пыраççĕ. Колхозăн кашни бригадинчех учительсем колхозниксене ВКП(б) XVIII конференцийĕ йышăннă решенисем çинчен ăнлантарса параççĕ. Вĕсем тата колхозниксене пухса, вăйлă тырпул туса илесси çинчен калаçусем ирттереççĕ.

Халиччен Шмидт ячĕпе тăракан колхоз районра кайра пыракан колхоз шутланнă. Халĕ ĕнтĕ, учительсем колхозниксене партипе правительствăн решенийĕсене тăтăшах ăнлантарса пама тытăннă хыççăн, колхозра малти вырăна тухассишĕн кĕрешӳ пуçланчĕ.

Ф. СЕМЕНОВ.

Ялхуçалăх артелĕн уставне пăсаççĕ

Ялхуçалăх артелĕн уставĕ колхоз строительствин тĕп законĕ пулса тăрать. Ăна кашни колхозăн пăхăнса ĕçлемелле, пурнăçа кĕртсе пымалла. Устава пăсма никама та ирĕк паман.

Апла пулсан та, Красноармейски районри колхозсенче устава пăснă тĕслĕхсем пур. Акă Мăн Шетмĕ ялсоветне кĕрекен «Хĕрлĕ Шетмĕ» колхоза илер. Устав тăрăх колхозăн государство умĕнче тăракан парăмсене йăлтах вăхăтра парса татмалла. «Хĕрлĕ Шетмĕ» колхоз çакна вăхăтра пурнăçласа пымасть. Иртнĕ çулта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пĕр енĕпе те тултарман. План тăрăх 115 лаша пулмалла, 84 лаша кăна, 49 ĕне вырăнне 16 çеç. Государствăна 500 центнер тырă парса татман, ытти парăмсем те пур. Çуракине начар хатĕрленет, вăрлăх çитмест, пуррисем кондицине лармаççĕ, лаша кӳлмелли хатĕрсем çителĕклĕ мар.

Уйăм колхозниксем ытлашши кулăран участокĕпе усă кураççĕ. Ку тĕлĕшпе колхоз председателĕ Макаров олташ хăй пример кăтартать, вăл устава пăсса кулăран участокĕнче 0,40 га çĕрпе усă курса пурăнать.

Мартынкасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче те çавнашкалах. Кунта та устава пăхăнмасăр ĕçлеççĕ. Вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмеççĕ, колхоз производствинче дисциплина начар, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултармаççĕ. Лаша кӳлмелли хатĕрсене колхозниксен килĕсенче выртараççĕ.

Тельман ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Трофимов тата «Новое дело» колхоз председателĕ Матвеев устав тăрăх пĕрлештермелли уйăм хуралтсене халĕ те пĕрлештермесĕр тăраççĕ. «Новое дело» колхоза единоличниксене колхоз членне илнĕ чух та устава пăсаççĕ. Сăмахран, нумаях пулмасть В. Петровпа А. Трофимова семьисене колхоза илмелле пулнă Пухăва сасăлама пултаракан 130 çынран 95 çын пынă. Çавсенчен В. Петров семьине колхоза илессишĕн 48 çын сасăланă.

«Красный Восток» колхозри Горшков ертсе пыракан бригада 1940 çула 7 гектар çинче утă, 0,25 гектар çинче силос валли акнă культурăсене çор айне хăварнă, пĕр участокри тĕгырра вăхăтра пуçтарса илеймесĕр çуррине тăккаласа хăварнă. «Коммунар» колхозра вăрлăх валли шăтăка хунă 300 центнер çĕрулмине шăнтса янă. «Валазар» колхоз председателĕ Титов тата счетовод Матвеев колхозниксене улталаса пурăнаççĕ, колхоз укçипе ĕçеççĕ. Колхозра виçĕмĕш çул ĕнтĕ ревизи пулман. Титовпа Матвеев кăçалхи перепиç вăхăтĕнче хăйсен килти вылăхĕсене переписе кĕртмесĕр пытарса хăварнă. Молотов ячĕпе тăракан, «Новая сила» тата ытти хăшпĕр колхозсенче колхозниксене хĕнеççĕ. Николаев бригадир колхоз хуралçине, Молотов ячĕпе тăракан колхоз счетоводĕ Куприянов хăйсен колхозĕнчи конюха хĕнесе гăкнă.

Ялхуçалăх артелĕн уставне киревсĕр пăсса ĕçлесе пыни колхоз хуçалăхне каялла туртать. Çаксем вĕсем вырăнти совет органĕсем (райсовет исполкомĕ, ялсовет, çĕрĕç пайĕ т. ыт.) çителĕклĕ ертсе пыманнинчен килнĕ. Вĕсем чылайăшĕ колхоз строительствине çителĕклĕ ертсе пыраймаççĕ, вĕсен кулленхи пурнăçĕпе, ĕçĕпе интересленмеççĕ. 1940 çулта 96 колхоз председателĕнчен 46-шне тата 43 бригадира улăштарнă. Уйăм колхозсем çулталăк хушшинче кăна тăвата председателе çитнĕ («Хĕрлĕ Шетмĕ»).

Ĕççыпни депутачĕсен вырăнти Советĕсем çумĕнчи ялхуçалăх енĕпе организацилеме яланлăх комиссисем ĕçлемеççĕ, вĕсене ĕçлеме пулăшмаççĕ. Массăллă ĕç çук. Паллах, ун пек ялсоветсемпе колхозсенче нименле ĕç те вăхăтра, кирлĕ пек пулса пырайманть.

Я. МУРАТОВ.

Сĕт-çу хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес пулать

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче «Государствăна колхозсем обязательнăй йĕркепе сĕт тăратасси çинчен» постановлени йышăннă. Вăл постановлени ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пысăк пулăшу пачĕ.

Колхозсене кăçал акмалли çĕр лаптăкĕшне кура государствăна сĕт тăратмалла тунă. Халиччен ĕне усракан колхозсем кăна сĕт панă. Çакăн пек йĕркене пулнă пирки хăшпĕр колхозсем юриех ĕне усрамач тата сĕт парассинчен пăрăнса юлнă. Халĕ çак йĕркене пăрахăçа кăларнă. Кашни колхозăн государствăна сĕт памалла.

Государствăна акмалли çĕр лаптăкĕшне кура сĕт памалла туни колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес енчен пысăк вырăн йышăнса тăрать, вылăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстерме май парать. Çавăн пекех государствăна сĕт парас обязательствăна пысăк çитĕнӳсемпе тултарма пулăшать.

Пирĕн республикăри колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановлението хăпăл тусах кырларĕç. Малта пыракан колхозсем çав постановлени тухнă хыççăнах хăйсен обязательствине тултарма тытăнчĕç. Хăшпĕр колхозсем сĕт памалли плана ăнăçлăн пурнăçласа пыраçĕ.

Колхозсем хăйсен обязательствисене вăхăтра тултарма тăрăшаççĕ пулин те, сĕт-çу хатĕрлекен организацисем сĕт пама пыракансене кĕтсе илме хатĕрленсе çитмен. Хальхи вăхăтра ĕнесем пăрулама тытăнчĕç. Колхозниксем, единоличниксем, рабочисем тата служащисем сĕт-çу завочĕсемпе сепаратор пункчĕсене сĕт пама тытăнчĕç. Вĕсен йышĕ кашни кунах ӳссе пырать. Хатĕрлев организацисем хăйсен ĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçласа пымаççĕ.

Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, хăшпĕр сĕт-çу завочĕсенче, сепаратор пункчĕсенче сĕт турттарма тата усрама савăт-сапасем çителĕксĕр. Çакăн пирки Калинински, Кувакино, Первомайски т. ыт. районсенче сĕт пама пыракансене каялла янисем те сахал мар пулнă. Маслопром тресчĕн Чăваш республикинчи конторин районсенчи сĕт-çу завочĕсене савăт-сапасем хатĕрлеме пулăшман. Çавăн пекех колхозсенче те сĕт усрамалли савăт-сапасем çителĕксĕр. Хатĕрлев организацисенче сĕт усрамалли савăт-сапасем çителĕксĕр пулни ĕçре пысăк чăрмав кӳрет. Апла пулин те вĕсем çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

1940 çул вĕçĕнче сĕт-çу завочĕсем сĕте тĕрĕс илнине тата учет ĕçне мĕнле туса пынине тĕрĕслесе тăнăччĕ Çакăн хыççăн заводсенче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă пулнă. Заводсенче сĕт илнĕ чухне йышăнакан сĕтрен мĕн чухлĕ çу тухнине сăнамасăрах илнĕ. Час-часах сĕтрен çу сахал тухать, тесе каланă. Сĕт мĕн чухлĕ йышăннинне тĕрĕс учета илес пыман. Çавăн пекех сĕт панăшăн тӳлемелли ӳкçана та вăхăтра парса татман пулнă. Ун чухне айăплă çынсене тивĕçлĕ ответ тыттарнăччĕ.

Иртнĕ çулхи йĕркесĕрлĕхсем халĕ те çинчен» постановлени йышăннă. Вăл постановлени ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пысăк пулăшу пачĕ.

Колхозсене кăçал акмалли çĕр лаптăкĕшне кура государствăна сĕт тăратмалла тунă. Халиччен ĕне усракан колхозсем кăна сĕт панă. Çакăн пек йĕркене пулнă пирки хăшпĕр колхозсем юриех ĕне усрамач тата сĕт парассинчен пăрăнса юлнă. Халĕ çак йĕркене пăрахăçа кăларнă. Кашни колхозăн государствăна сĕт памалла.

Государствăна акмалли çĕр лаптăкĕшне кура сĕт памалла туни колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес енчен пысăк вырăн йышăнса тăрать, вылăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстерме май парать. Çавăн пекех государствăна сĕт парас обязательствăна пысăк çитĕнӳсемпе тултарма пулăшать.

Пирĕн республикăри колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановлението хăпăл тусах кырларĕç. Малта пыракан колхозсем çав постановлени тухнă хыççăнах хăйсен обязательствине тултарма тытăнчĕç. Хăшпĕр колхозсем сĕт памалли плана ăнăçлăн пурнăçласа пыраçĕ.

Колхозсем хăйсен обязательствисене вăхăтра тултарма тăрăшаççĕ пулин те, сĕт-çу хатĕрлекен организацисем сĕт пама пыракансене кĕтсе илме хатĕрленсе çитмен. Хальхи вăхăтра ĕнесем пăрулама тытăнчĕç. Колхозниксем, единоличниксем, рабочисем тата служащисем сĕт-çу завочĕсемпе сепаратор пункчĕсене сĕт пама тытăнчĕç. Вĕсен йышĕ кашни кунах ӳссе пырать. Хатĕрлев организацисем хăйсен ĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçласа пымаççĕ.

Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, хăшпĕр сĕт-çу завочĕсенче, сепаратор пункчĕсенче сĕт турттарма тата усрама савăт-сапасем çителĕксĕр. Çакăн пирки Калинински, Кувакино, Первомайски т. ыт. районсенче сĕт пама пыракансене каялла янисем те сахал мар пулнă. Маслопром тресчĕн Чăваш республикинчи конторин районсенчи сĕт-çу завочĕсене савăт-сапасем хатĕрлеме пулăшман. Çавăн пекех колхозсенче те сĕт усрамалли савăт-сапасем çителĕксĕр. Хатĕрлев организацисенче сĕт усрамалли савăт-сапасем çителĕксĕр пулни ĕçре пысăк чăрмав кӳрет. Апла пулин те вĕсем çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

1940 çул вĕçĕнче сĕт-çу завочĕсем сĕте тĕрĕс илнине тата учет ĕçне мĕнле туса пынине тĕрĕслесе тăнăччĕ Çакăн хыççăн заводсенче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă пулнă. Заводсенче сĕт илнĕ чухне йышăнакан сĕтрен мĕн чухлĕ çу тухнине сăнамасăрах илнĕ. Час-часах сĕтрен çу сахал тухать, тесе каланă. Сĕт мĕн чухлĕ йышăннине

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра активлă вăрçă ĕçĕсем пулман. Германи командованийĕн сводкинче калана тăрăх, мартăн 27-мĕшĕнче Германин разведка тăвакан самолечĕсем Кăнтăр Англири хăшпĕр хуласенчи портсен, промышленноçпа чугунçулсен сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Тинĕс çинчи вăрçă операцийĕсем пулса пынă. Уэльсăн кăнтăр-хĕвеланăç сыранĕ патĕнчи районра Германи бомбардировщикĕсем Англи суднисен караванне атакăланă, виçĕ суднине пуçтарнă тата 4 суднине пысăк сиен кӳнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ыран мартăн 28-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн самолечĕсем Германири Рур тата Рейн облаçĕсенчи хăшпĕр объектсем çине пырса тапăннă.

* * *

Çапăçакан енсен сводкисенче калана тăрăх, мартăн 27-мĕшĕнче Албанири фронтсенче противниксем пĕр-пĕрич çине артиллерирен персе тăнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вийоса юханшывăн районĕнче Итали пехотин чăçĕсем икĕ хутчен атака тунă, анчах вăл атакăсене сирсе янă. Фронтăн пур участокĕсенче те авиаци чылаях активлăн кĕрешнĕ. Итали çарĕн верховнăй командованийĕ кăларнă сводкăра калана тăрăх, Итали самолечĕсем грексен тылри центрĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче Итали тинĕс-çар вăйĕсен активлăхĕ пăлăрать. Итали командованийĕн сводкинче калана тăрăх, ыран мартăн 26-мĕш тенĕ чух сĕрле Итали карапĕсем Суда заливне (Крит утравĕ) пырса кĕнĕ, унта тăракан çар карапĕсемне транспорт суднисене атакăланă. Англин çар карапĕсенчен пĕрне путарнă. Англи авиацийĕ Италин Эгейски тинĕс бассейнĕнчи базисем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Сурçĕр Африкăра нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман. Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи отрячĕ Эль-Агеилăна (Ливия) кăна мар, Британин çак опорлă базинчен кăнтăр енчи пĕтĕм вырăна та хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере калана тăрăх, Эль-Агеилăран чакса кайнă англичансен патруль чăçĕсем Аджедабире тăрассĕ (Аджедаби—Бенгази патĕнчен 160 километрта).

Хĕвелтухăç Африкăра, Эритрейăра, 6 эрне хушши çапăснă хыççăн Англи войскисем Керена туртса илнĕ. Лайăх укрепленийллĕ çак хулана англичансем виçĕ енчен хупăрласа илнĕ. Ытларах хаяр çапăçусем юлашки 12 кун хушшинче пулса иртнĕ, час-часах штыксем вĕççĕн тытăçса та çапăçнă. Çак кунсенче Англи авиацийĕ хула çине 120 тонна бомба пырса пăрахнă.

Керена туртса илнĕ пирки Рейтер агентстви çапла çырать: çак операцисене Инди войскисем уйăмах активлăн хутшăннă. Керен районĕнче 60—70 ин çын—Италин Хĕвелтухăç Африкăри вăйăсен виççĕмĕш пайĕ пухăнса тăнă пулнă. Керена туртса илнипе Эритрейăра англичансен стратегиллĕ положенийĕ чылаях лайăхланнă. Рейтер агентстви çапла кăтартса парать: Керен—Эритрея столици Асмара патне пымалли çул çинчи пĕртен-пĕр пысăк чăрмав пулнă. Керен Асмара патĕнчен çурçĕр хĕвеланăç енне 70 миляра. Керен—Асмара — Массауа чугунçулĕ çинче вырнаçса тăрать. Çак хулана англичансем туртса илнĕ хыççăн Эритрейăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ англичансен аллине куçнă. Рейтер агентстви шутланă тăрăх, Италин Асмарăпа Массауара вырнаçса тăракан войски çем англичансене хирĕç вăйлăн кĕрешме пултараймаççĕ. Абиссинире Джиг-Джигăран малалла кайса пыракан Англи войскисем Харара туртса илнĕ (Аддис-Абебăна Джибути хушшинчи чугунçул патĕнчен 35 миляра). Харар—Абиссинири чи пысăк хуласенчен пĕри, унта 50 пин çынна яхăн пурăнать. Харар—Абиссинири тырă чи лайăх пулакан провинцисенчен пĕрин центрĕ. Вăл караван çулĕсем çинче вырнаçса тăрать. Хула йĕритавра чул стена туса тухнă. Харара туртса илни итальянецсен Хĕрлĕ тинĕсе тухмалли коммуникацийĕ умне—Джибутипе Аддис-Абеба хушшинчи чугунçул умне хăрушлăх кăларса тăратать. Çак чугунçула туртса илес пулсан, Англи войскисем Аддис-Абебăна тата унти Итали войскисене йăлтах хупăрласа илеççĕ.

Англи войскисем Аддис-Абеба çине пытти енчен те наступлени туса пыраççĕ. Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере калана тăрăх, Хĕвеланăç Абиссинире Англи войскисем Гамбела туртса илнĕ тата çак пункт таврашĕнчи района итальянецсентен тасатнă. Кăнтăр Абиссинире, Явелло патĕнчен хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енче Абиссинии партизанĕсем темиçе поста туртса илнĕ.

Мартăн 28-мĕш. (ТАСС).



Çĕмĕрлери ФЗО шкулĕнче слесарьсен группинче вĕренекен отличник Виктор Николаев.
Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсем

Группăсене общественнăй инструкторсем ертсе пыраççĕ

«Спартак» тата «Восход» спорт обществисен вырăнсенчи физкультура коллективĕсем çĕр ытла шуталанаççĕ. Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ йышăннă тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа икĕ спорт обществине пĕр çĕре—«Спартак» обществине пĕрлештернĕ. Çакăн хыççăн ку общество татах та пысăк, массăллă спорт обществи пулса тăчĕ, çĕнĕ работниксемпе çирĕпленчĕ.

Хальхи вăхăтра «Спартак» обществи комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвече активлăн хатĕрленет. Вырăнсенчи физкультура коллективĕсене ăмăртăва хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе Ишлей, Красноармейски, Йĕпреç тата Пăрачкав районĕсене инструкторсем янă. Çак инструкторсем районсенчи коллективсенче ăмăртусем пĕтичченех пулаççĕ, практикăллă пулăшусем парса пулăшаççĕ. Кунсăр пуçне вырăнти коллективсене зарядка тумалли упражненисене кăтартакан плакатсем ярса панă. Ку плакатсем упражненисене мĕнле тумалли çинчен аван кăтартса параççĕ. Ăмăртăва хатĕрленес ĕçре çакăн пек плакатсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ

Вырăнсенчи физкультура коллективĕсем гимнастикăллă ăмăртусене тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç. Енĕшкассинчи «Стрела» артельте (Красноармейски р.) 8 группа организацине. Группăсенче расписани тăрăх тренировкăсем ирттереççĕ. Тренировкăсене коллективри чи лайăх активистсенчен уйăрнă общественнăй инструкторсем ертсе пыраççĕ.

Йĕпреçри «Кооплеспром», Асанкассинчи (Комсомольски р.), Чурачăкри тата Янгильдинăри (Ишлей р.) артельсенче те гимнастикăллă ăмăртусене хутшăннă. Асăннă артельсенче кашнинчех 2—3-шер группа уйăрнă. Шупашкар хулинчи коллективсенче 3 группа ăмăртăва хутшăннă, вĕсем тренировкăсене йĕркеллĕ ирттереççĕ.

Çĕрпӳри профшкулта тата «Перламутр» артельте пурĕ 11 группа организацине. Группăсенче тренировкăсем ирттерме тытăннă.

Г. ИВАНОВ.

Тренировкăсем ирттерме тытăнчĕç

СЕНТЕР. Районра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем кăçалхи апрель уйăхĕнче пулса иртекен гимнастикăллă ăмăртусене хатĕрленме тытăнчĕç. Паянхи куна районĕпе 60 группа ытла организациленĕ. Ăмăртăва комсомолта тăман çамрăксем те хутшăнчĕç.

Колхоз шкулĕнче 5 группа тунă. Вĕсем виçĕ хутчен тренировкăсем туса ирттернĕ. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта та гимнастикăллă ăмăртăва хатĕрленеççĕ. Унта та тренировкăсем ирттернĕ. Занятисене физрук В. Стрелков юлташ ертсе пырать.

Çак кунсенче ВЛКСМ райкомĕ тренировкăсем ирттерме уйăрнă руководительсен семинарне ирттерчĕ. Руководительсем пулса ĕçлеме кăçал Хĕрлĕ Сартан таврăннă красноармеецсемпе кĕçĕн командирсене уйăрнă.

С. НАЛИМОВ.

8 группа уйăрнă

СЕНТЕР. Мургашри вăтам шкул çумĕнчи «Учитель» обществин коллективĕ хĕллехи спорт ĕçĕсене йĕркеллĕ пуçăçласа пычĕ. Коллектив профсоюзсен тата комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕсене лайăх тĕслĕхсемпе ирттернĕ. Учительсен хĕллехи праçникĕ те аван иртрĕ.

«Учитель» спорт обществин чăваш совечĕ пирĕн коллектива хисеплĕ грамотăпа наградаларĕ.

Хальхи вăхăтра гимнастикăллă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Ку ăмăртăва Мургашри вăтам шкулта вĕренекенсем те хутшăннă. Шкулĕпе 8 группа уйăрнă, вĕсем тренировкăсем ирттерме тытăнчĕç.

А. НОВИКОВ.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче физкультура коллективĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ пуçланать

Коллектив совечĕсене пултарулла çынсене суйлар

ВЦСПС Секретариачĕ йышăннă тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕнче профсоюзсем пĕрлештерсе тăракан ирĕклĕ спорт обществисен совечĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ пуçланать. Отчетпа суйлав кампанийĕ умĕнче тăракан тĕп задача: тăван çĕршывăн хуçалăхпа оборона вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пырас, партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе физкультурниксене мобилизацилесси, профсоюзсен сарлака массине физкультура ĕçне йышлăн явăçтарасси тата профсоюзсенче физкультурăпа спортăн пĕтĕм ĕçне лайăхлатасси пулса тăрать.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче большевикла критикăпа самокритикăна пăхăнăн сарса, физкультура коллективĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртмалла тата вăл çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса хăвармалла.

Тепĕр пысăк задача — вăл ертсе пыракан органсене — коллективăн советне тата бюроне суйласси пулса тăрать. Коллектива ертсе пырас ĕçе çынсене организацилеме, хăйĕн паха примерĕсемпе çамрăксене физкультура ĕçне явăçтарма пултаракан çынсене суйламалла. Физкультурниксем хушшинче пирĕн ун пек çынсем нумай. Хĕллехи вăхăтра ирттернĕ массăллă ăмăртусем физкультура ĕçĕнчи пултаруллă çынсене — массовик-организаторсене йышлăн палăртма май пачĕç. Халь пирĕн вĕсене физкультурăн ертсе пырас ĕçне суйласа лартмалла.

Отчетпа суйлав кампанийĕ майăн 10-мĕшĕнчен пырать, вăл комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсемпе, комсомолпа профсоюзсен çуркунне çăмăл атлетика енĕпе пулса иртекен кросĕсене хатĕрленессипе пĕр вăхăтра пулса иртет. Çак массăллă мероприятисене кашни коллективăн отчетпа суйлав кампанине ирттересси пысăк çынсене организацилеме, хăйĕн паха примерĕсемпе çамрăксене физкультура ĕçне явăçтарма пултаракан çынсене суйламалла. Массăллă ăмăртусем коллектив ĕçне лайăхлатмалла, çĕнĕ çынсене явăçтармалла.

Физкультура коллективĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ профсоюзсен умне пысăк задачăсем лартать. ВЦСПС çирĕплетнĕ инструкци тăрăх, пухусене хатĕрленсе ирттересси пĕтĕмпех фабзавкомсемпе вырăнти комитетсем ертсе пынипе пулса иртмелле.

Çавăн пекех, комсомол та ку ĕçе активлăн хутшăнасса шанса тăмалла. Мĕншĕн тесен физкультура унăн чи юратнă ĕçĕ пулса тăрать. Кăçал хĕллехи сезонра комсомол йĕлтĕр спорчĕ енĕпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Халĕ вăл, çав паха опытсемпе усă курса, çарпа физкультура ĕçне йĕркеллĕ, план тăрăх туса пыма тытăнать. Ку ĕçре ăна отчетпа суйлав пухăвĕсем, физкультурăн вырăнти коллективĕсене çирĕплетсе пыни тагах та пысăк пулăшу парĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕн суйлав кампани ĕнне пынине контроль туса тăнипе тĕрлех, кашни коллектива пулăшса пымалла.

Спорт обществисен пухусене ирттерме малтанах тĕплĕн хатĕрленмелле. Пуху пулмалли çуртсене хатĕрлесси, пуху пуласси çинчен пĕлтерсе хурасси пухăва хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пулаççĕ. Совет отчетне тĕплĕн çырса хатĕрлемелле тата ăна коллектив совечĕн ларăвĕнче çирĕплетмелле.

Физкультура коллективĕсенче отчетпа суйлав кампанине лайăх хатĕрленсе ирттерни физкультурăпа спорт ĕçне татах та çӳлĕ пусăма лартма, çуллахи спорт енĕпе ирттерме палăртнă массăллă мероприятисене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшĕ.

Селькорсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Мартăн 26-мĕшĕнче стена хаçат редакторĕсемпе редколлеги членĕсен тăга рабселькорсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ВКП(б) XVIII конференцин итогĕ тата стена хаçачĕсен задачисем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Георгиев юлташ тунă докладпа пысăк активлăхпа сӳтсе-явнă. Именкасси вăтам шкулĕнчи учитель Александров юлташ ĕçлеме пулса нумай обязательство илекен, анчах та нимĕн те туман çынсем çинчен каларĕ. Федякинецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă чухне, — тет Александров, — ялти интеллигенци нумай обязательство илчĕ. Шофер Алексеев юлташ шкулти ачасене автомобильпе çӳреме вĕрентме, колхозник Федоров юлташ фермăсенчи выльăх-чĕрлĕхе тăрантармалли апат-çимĕç рационне тума пулчĕç. Анчах та вĕсем пĕри те хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртмерĕç.

Унтан вăл «Малалла» колхозра социализмлă пурлăх çине ответсăрла пăхнине фактсемпе çирĕплетсе пачĕ. Соломорезка, льнотеребилка тата плугсем юр айĕнче сапаланса выртаççĕ.

Ытмар ялсовечĕ çумĕнчи «Большевик» отена хаçачĕн редакторĕ Герасимов юлташ ВКП(б) XVIII конференцийĕ хыççăн стена хаçат ĕçне уйăрмах лайăхлатни çинчен каларĕ. Хаçат çине колхоз председателĕсем, ферма работникĕсем, учительсем — пурĕ 16 çын çырса тăраççĕ.

Канашлу колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес шутпа пур колхозсенче те селькорсен рейд ирттерме йышăнчĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Чăваш АССР Республикинчи МТС-сем тракторсене мĕн пухлĕ юсанине кăтартакан СВОДКА

(1941 ç. мартăн 25-мĕшне, процентпа)

МТС ячĕсем	Капиталлă. ремонт	Текущий ремонт	Пĕтĕмпе
Улатăр	66,6	38,7	46,5
Элĕк	82,3	93,5	89,5
Вăрнар	100	100	100
Йĕпреç	100	100	100
Ишлей	76,1	90,9	85,1
Канаш	100	90,0	92,1
Куславкка	70,0	77,7	74,4
Комсомольски	100	100	100
Хĕрлĕ Чутай	—	100	93,3
Кувакино	100	94,2	96,3
Сĕнтĕрвăрри	83,3	85,0	84,6
Первомайски	100	83,3	87,5
Пăрачкав	80,9	88,8	86,3
Сĕнтĕр	90,4	93,3	92,1
Красноармейски	93,7	71,0	77,7
Вăрмар	83,3	91,6	88,3
Çĕрпӳ	88,8	67,5	74,1
Шупашкар	88,8	88,4	88,6
Чкаловски	90,4	82,7	86,0
Шăмăршă	100	100	100
Шăхасан	100	100	100
Çĕмĕрле	100	85,7	90,0
Етĕрне	63,6	73,4	70,5
Елчĕк	100	88,3	92,7
Тăвай	80,0	72,4	75,0
Республикипе 1941 ç. мартăн 20-мĕшне пулнă	88,2	85,8	86,6
	85,0	82,8	83,5

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Качебайри (Сĕнтĕр р.) Н. Ижедерова илти колхозниксен пурлăхĕсене вăрлаçа пурăннă. Вăрланă япаласене тупса хăйне айăпласран шикленнипе, чылай япаласене кăмакара çунтарса янă. Унăн ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине çăлараканскен килçуртне вут тĕртсе çунтарма шут тытнă.

Март уйăхĕн пуçламĕшĕнче Г. Захаров колхозникăн сарайне кĕрсе вут тивретсе янă. Анчах та колхозниксем вăхăтра сиснĕ пирки çунма пуçланă улăмсене сийĕнчех сӳтернĕ.

Н. Ижедерова арестлесе ĕçе суд аллине панă.

Лекци

Ыран, мартăн 31-мĕшĕнче, Советсен Сурчĕн ларусем пулакан заленче Шупашкар хулинчи çамрăксем валли «**Культура и культурность**» темăпа лекци пулать. Лектор — пединститут доценчĕ **Н. И. Бокарев**.

Итлеме билетсемпе кĕртеççĕ, вăл билетсене комитетсен секретарĕсем ВЛКСМ горкомĕнче илмелле.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ВЛКСМ горкомĕ.

ВНИМАНИЮ ОРГАНИЗАТОРОВ

КОЛЛЕКТИВНОГО ПОСЕЩЕНИЯ СПЕКТАКЛЕЙ!

До 15 апреля в Чувашском Государственном Академическом театре постановки „НАРСПИ" и „НА БЕРЕГУ НЕВЫ" состоятся в следующие дни:
„НАРСПИ"—1, 2, 3, 8, 9, 12 и 15 апреля.
„НА БЕРЕГУ НЕВЫ"—4, 5, 6, 7, 10, 11, 13 и 14 апреля.

ОРГАНИЗУЙТЕ коллективное посещение этих спектаклей.

При коллективных заявках (50 чел.) дается 20% скидки.

ДИРЕКЦИЯ.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Мартăн 22-мĕшпе 28-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Иртнĕ эрне хушшинче чи пысăк операцисем Цзянси провинцийĕн çурçĕр пайĕнче, Наньчан хулинчен хĕвеланăç енче пулса иртнĕ. Иртнĕ эрне вĕçĕнчех çак районра Япони войскисем хĕвеланăç еннелле наступлени тума пуçланă. Вĕсем виçĕ колоннăпа наступлени туса пынă. Пĕр колонни Аньи хулинчен Сяньфынь çинелле наступлени туса пынă. Тепĕр колонни Сишань—Ваншоугуань районĕнчен Гарань еннелле, виççĕмĕш колонни Цзючуаньрен Дучен еннелле наступлени туса пынă. Çак виçĕ колонна умне Шангао хулине туртса илес задача лартнă. Пĕрремĕш колонни, Фынсинь хули витĕр тухса, Лоуфана çитнĕ. Иккĕмĕш колонни, Гарань урлă наступлени туса пырса, Шесине çитнĕ, виççĕмĕш колонни, Чуцзян урлă иртсе пырса, Дучен патнелле сывхарса пынă. Китай войскисем, хăйсен Ифыньри, Шангаори тата Циньцзянри базисем пулăшнипе активлă операцисем сарса янă. Мартăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшне çитиччен вăйлă çапăçусем пынă, çак çапăçусенче Япони войскисен çурçĕрпе центральнăй колоннисене чылаях пысăк çухатусем кӳнĕ. Китай войскисем вăйлă контратакăсем тунине пула çак икĕ колоннăна каялла чакма тивнĕ.

Мартăн 23-мĕшпе 24-мĕшĕнче, Кăнтăр Китайри Гуандун провинцийĕн çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕнче, Гонконг патĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăç енче Японии войскисем десантсем антарса хăварнă. Çак операцисене пула Свотоу, Чаоян районĕсенче тата Ханхай заливĕн сыранĕнче çапăçусем сарăлса кайнă. Авиаци тата суднăсен артиллерийĕ пулăшнипе çапăçакан Япони войскисем Китай войскисен пысăк мар чăçĕсене хĕсĕрлесе пынă, Чаоянă, Шанвэя тата Хаймыне туртса илнĕ. Хаймыньре японецсем вăрçă материалĕсен чылаях пысăк запасĕсене туртса илнĕ. Япони командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак операцине Китай халли Гуандун провинцийĕн çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕнчи чылай пункт урлă вăрçă материалĕсем турттарса пыма чарса лартас шутпа тунă.

Çурçĕр Китайра çапăçусем Шаньси провинцийĕн кăнтăр пайĕнче пыраççĕ. Китай войскисем Чженьчэнпа Поай хушшинчи шоссе çулĕ тăрăхĕнче чылай ăнăçлă контратакăсем тунă. Китаецсем Япони подкрепленийĕсене илсе пыма чăрмантарас тесе тăрăшаççĕ. Линчуань хули районĕнче Китай войскисем японецсен позицийĕсене хирĕç ăнăçлă атакăсем тунă, юлашки сăхăтра темиçе хут та алăран алла куçнă хулана туртса илнĕ. Японецсем Линчуаньрен çурçĕр хĕвеланăç енче 20 километрта çирĕпленсе тăма тăрăшаççĕ.

Мартăн 28-мĕш. (ТАСС).

Югослави премьер-министрĕ генерал Симович хаçатсен представителĕсене каласа пĕлтерни

БЕЛГРАД, мартăн 28-мĕш. (ТАСС). Югославири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер каçхине 21 сехетре премьер-министр генерал Душан Симович председатель пулса ертсе пынипе Югославири министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Лару пĕтнĕ хыççăн генерал Симович хаçатсен представителĕсене çапла пĕлтернĕ:

«Çак йывăр кунсенче государство ĕçĕсене мĕнле тытса пыни çине пăхса, Югослави халăхĕ питех те канăçсăрланчĕ. Çакнашкал ĕçсене шанманни юлашки кунсенче калама çук вăйланса кайрĕ, обществăллă йĕркелĕхшĕн хăрушлăх тухса тăчĕ. Общество канăçа сухатнине пула, паянхи улшăкусем пулса иртрĕç. Унăн величествви Петр II король власа хăй аллине илсе, нацmicroлĕ килĕшӳллĕх правительствине — серб, хорват тата словен халăхĕн шухăшĕсене палăртса тăракан правительствăна туса йĕркеленĕ хыççăн, канăçсăрланма урăх нимĕнле сăлтав та çук.

Хам ертсе пыракан правительство ячĕпе эпĕ, пуринчен малтан, граждансемпе влассене чĕнсе калатăп, хальхи самантри чи кирлĕ задачăсене — çĕршывра йĕркелĕх тата унăн чикки сене че мир тытса тăрас задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре Югослави правительствине пулăшу пама ыйтатăп. Эпĕ Югославири граждансенчен манифестацисем тумашкăн пăрахма ыйтатăп, вĕсем пирĕнпе кӳршĕсем хушшинче йывăрлăхсем туса хума пултараççĕ, хамăр кӳршĕсемпе эпир мăнлашпе те мирлĕ тата туслă пурăнасшăн».

Принц Павел Белградран тухса кайнă

БЕЛГРАД, мартăн 28-мĕш. (ТАСС). Мартăн 27-мĕшĕнче каçхине 23 сехет те 50 минутăра принц Павел хăйĕн семьипе пĕрле Белградран Афины хулине (Грецине) тухса кайнă.

Белградри полици начальникне улăштарнă

БЕЛГРАД, мартăн 28-мĕш. (ТАСС) Ĕнер Югославири çĕнĕ правительство жандармерин бригадăй генералне Стефановича Белградри полици начальникĕ пулма уйăрса лартнă. Белград хулинчи полици начальникĕ пулнă Дринчича вырăнтан кăларнă.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

артели „Труженик" системы Чувашдревпромсоюза на 1 января 1941 г. (в руб.)

АКТИВ

	СУММА	
	На 1/I 1940 г.	На 1/I 1941 г.
Основные средства (разд. I)	794677	1150661
Предметы, не относимые к основным средствам (разд. II)	109341	105856
Сырье, материалы и топливо (сч. 08/07, 09, 12)	386071	369574
Незаконченное производство (разд. IV)	267112	257547
Прочие товаро-матер. ценности (сч. 10, 11, 04, 13)	9820	7007
Готовая продукция и товары (сч. 19, 20)	326490	284784
Товары в рознице (сч. 21)	—	888
Товары, отгруженные, и выполненные работы и услуги (разд. VII)	111991	61486
Денежные средства (разд. VIII)	3588	7515
Расчеты (разд. IX)		
подотчетные лица	964	750
дебиторы	44163	43939
расч. с бюджетом	295	—
Расходы за счет будущих операций (раз. X)	13417	8258
Отвлеченные средства (разд. XI)		
ценные бумаги	17595	17595
спецвклады в торгбанке	—	—
прочие отвлеченные средства	272373	324872
Междубалансовые расчеты		
с балансом капиталовложений	—	997
БАЛАНС	2357900	2641724

ПАССИВ

	СУММА	
	На 1/I 1940 г.	На 1/I 1941 г.
Фонды (разд. I):		
основной фонд	817499	1238228
паевой фонд	125257	137474
амортизац. фонд	110031	103699
фонды специальные	19342	7576
Резервы и регулирующие статьи (разд. II и III)	8929	19558
Долгосрочные кредиты (разд. IV), полученные через Торгбанк	95085	94337
Краткосрочные кредиты Госбанка (разд. V)	160125	75300
Расчеты (разд. VI)	—	
задолженность по зарплате	77264	157674
кредиторы	480944	532245
расчет с бюджетом (сч 74)	2245	37005
Междубалансовые расчеты:		
Прибыль отчетного года	461179	238628
БАЛАНС	2357900	2641724

ЗА БАЛАНСОМ: 1. Износ основных средств руб. 172163.
2. Разница между себест. и отпускными ценами на остаток изделий и товаров руб. —
3. Арендованные основные средства руб. —

Основные показатели выполнения плана.

Убытки	
Убытки от реализации	1955
Убытки прошлых лет, выявл. в отч. году	15623
Убытки от списания безнадежных долгов	7032
Прочие убытки	53286
Итого руб.	77896
Прибыль отчетного года	238628
Всего руб.	316524

Прибыли	
Прибыль от реализации	295907
Прибыль от поступл. по безнадежн. долгам и от спис. кред. задолж.	5293
Прочие прибыли и доходы	15324
Убытки отчетного года	—
Всего руб.	316524

Председатель артели **Кротиков.** Зам главного бухгалтера **Смирнов.**
Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашдревпромсоюза 12 февраля 1941 г.
Председатель балансовой комиссии **Андреев.**

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2712

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.